Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

40 (8106) № ✻ Шăмат кун, 2013 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 8-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Паян – Социаллă ĕçченĕн кунĕ

## Çынна ăнланни, пулăшни паха

***Валентина Николаева районти социаллă ĕçченсен йышĕнче тăватă çул ĕнтĕ. Вăл пĕччен ватăна килĕнче пулăшса тăрать. Çынна яланах ăнланма, пулăшма хатĕрришĕн, ырă кăмăллă пулнăшăн хисеплеççĕ ăна ĕçтешĕсем.***

***«Совместительствăпа ĕçлекен сциаллă ĕçченĕн хăй пăхса тăракан ватă патне эрнере икĕ хутран сахал мар пулăшма çӳремелле пулсан, почтальонра тăрăшакан Валентина Октябристовна хăй пулăшакан çын патĕнче тăтăшах пулать, чылай тимлĕх уйăрать. Ватă çын та, эпир те унăн ĕçĕпе кăмăллă», – теççĕ Муркашри халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центрта вăй хуракансем.***

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**



**СОЦИАЛЛĂ СФЕРĂН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕ ячĕпе пĕтĕм чунтан саламлатăп!

Социаллă ĕçченĕн ĕç-хĕлне чун-чĕре хушнипе суйласа илеççĕ. Вăл пурнăçра йывăр лару-тăрăва лекнисемпе яланах юнашар, унăн ырă чĕри кашни пулăшу ыйтса чĕнекенех пулăшма хатĕр.

Чăваш Енре халăха паракан социаллă пулăшăва вăйлатса пырас енĕпе кирлĕ шайра ĕçлеççĕ.

«Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят илме ирĕк пур граждансен ушкăнĕсен хисепне анлăлатнă. Чăваш Республикин ырлăхĕшĕн нумай çул тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçленĕ 20 пин ытла çын ветеран ятне, унпа пĕрлех социаллă тӳлевсем тата çыхăну енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсемшĕн укçан саплаштарнине илсе тăмалли правăна тивĕçнĕ.

Чăваш Ен Правительстви ача амăшĕсене тата ачалăха социаллă пулăшу парасси çине уйрăмах тимлĕ пăхать. Сăмахран, 2012 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа виççĕмĕш е ун хыççăнхи ачасем çуралнă çемьесене республикăн амăшĕн капиталне уйăрса пàраççĕ. 2013 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа виççĕмĕш е ун хыççăнхи ачасем çуралсан вĕсем виçĕ çула çитиччен кашни уйăхра паракан тӳлеве çирĕплетнĕ.

Мĕн пур социаллă ĕçчене тата социаллă сферăн ветеранне чĕререн тав тăватăп. Эсир пурнăçри кирек мĕнле лару-тăрура та пысăк ăсталăхлă, тараватă тата тимлĕ çынсем пулнипе палăрса тăрасса çирĕппĕн шанса тăратăп.

Сире тата сирĕн çывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, иксĕлми ырă шанăç, телейпе ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

**СОЦИАЛЛĂ СФЕРĂН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ! ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Сăмăл мар, анчах пархатарлă ĕç тăватăр эсир. Хăвăр пата эсир пулăшасса шанса килнĕ кашни çын ыйтăвне татса пама тăрăшатăр. Инвалидсен, ветерансен, нумай ачаллă çемьесен, пулăшу кирлĕ çынсен проблемисене хăвăр витĕр кăларатăр, вĕсене татса парассишĕн тимлетĕр. Кашни çыннăн чун-чĕри патне уйрăм çул-йĕр тупатăр: ваттипе ватă пек, çамрăкпа çамрăк пек калаçатăр. Вĕсемшĕн шанчăкпа тĕрек пулса тăратăр.

Мĕн чухлĕ чăтăмлăх, чун ăшши кирлĕ çынсен кăмăлне курма. Сирĕн вара çак ырă енсем пурин валли те çитеççĕ. Тавах сире хăвăрăн ĕçе юратнишĕн. Малашне те пĕрре те ан иксĕлтĕрччĕ сирĕн ырă кăмăл.

Хăвăрăн та сывлăхăр çирĕп пултăр. Ĕçлес туртăм, вăй-хал пĕрре те ан чактăр. Сире пурне те телейлĕ те вăрăм кун-çул сунатăп.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене

## Ялти депутатсемпе старостăсем, пуçаруллăрах пулар!



***Вырăнсенче паян пурнăç мĕнле пуласси ытларах ял тăрăхĕн администрацийĕ, унăн пуçлăхĕ активлăхпа палăрса тăнинчен, халăх умĕнчи ответлăха туйса ĕçлесе пынинчен, пĕрлехи ĕçе вырăнти депутатсене, старостăсене, общество формированийĕсене анлăрах явăçтарма пултарнинчен, халăхпа ĕçлеме пĕлнинчен килнине юлашки вăхăтра ытларах та ытларах туйса илетпĕр. «Пĕччен суран – типсех пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать», – тенĕ. Чăвашсен авалхи каларăшĕнче – паянхи чăнлăх. Ялсенчи пурнăçа тивĕçлипе йĕркелесе пырасси – пĕр çын ĕçĕ мар. Кунта пурте пĕрле çыхăнса ĕçлени, пĕр шухăш-ĕмĕтлĕ пулни кирлĕ. Епле татса параççĕ-ха çак задачăна паян ял тăрăхĕсенче? Мĕн шухăшланисем пĕтĕмпех пурнăçланаççĕ-и? Çакăн пирки сăмах пуçартăм район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе – йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕпе Лилия ТАРАСОВĂПА тĕл пулсан.***

**– Лилия Юрьевна, сăмахăмăра тирпей-илем, территорисене тасатасси, хамăрăн тавралăха хăт кĕртесси пиркиех пуçлар пулĕ. Ку ыйту нихăçан та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатмасть. Ялсенче пулса çынсемпе тĕл пулнă чухне те нумай чухне асăннă ыйтăва хускатаççĕ. Районта йăлари хытă каяш полигонĕ те хута кайрĕ ĕнтĕ. Апла пулин те тасалăхпа тирпейлĕх енĕпе лару-тăру лайăх еннелле питĕ ерипен улшăнать.**

– Чăнах та ĕнтĕ полигон хута кайрĕ. Ку пĕлтерĕшлĕ самант. Ял тăрăхĕсенчен тĕрлĕ тасамарлăха тиесе тухса ăсатма вырăнĕ пур. Анчах та ку укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çавăнпа та пур чухне ялсенче пухăнакан каяша полигона ăсатассине ял тăрăхĕн шучĕпе кăна йĕркелеме ниепле те май çук. Кунта ял çыннисене хăйсене те явăçтарма тивет. Шел пулин те, çакă вырăнсенче ниепле те йĕркене кĕрсе çитеймест-ха. Саккунлăх шайĕнчех ку тĕлĕшпе йышăну кирлĕ.

Кунсăр пуçне тата акă мĕн каласа хăварасшăн. Полигон полигонпа та, ытларах чухне хамăрăн культура шайĕ çитсех кайманни пирки палăртсах хăварма тивет. Тасалăхпа тирпейлĕх енĕпе чылайăшĕ чи ансат правилăсене те пурнăçлама ӳркенет. Хăшĕсемшĕн пулсан хăйĕн кил картишĕнче, пахчинче йĕрке пултăр, ытти вара харама, унăн мар. Манас марччĕ, урам хушши те, пахча хыçĕ те, укăлча та, вăрманĕ те хамăрăнах-çке. Кам килсе йĕрке туса парĕ пире? Тĕрлĕ çӳп-çап кайса тăкса вĕсене варалакансене ку ыйту интереслентермест пулас.

Чăнах та ĕнтĕ йĕркелĕх хуçаран нумай килет. Çапах та ку тĕлĕшпе вырăнти депутатсем, старостăсем, ытти активистсем пуçаруллă пулни, халăхпа ĕçлеме пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Шăпах ĕнтĕ вĕсем пулса тăраççĕ те пуçлăхăн хăлхисем те, куçĕсем те. 16 ял тăрăхĕнче халĕ 185 депутат. Уйрăм ялти, урамри лару-тăрăва вĕсенчен лайăхрах никам та пĕлмест. Халăхпа пĕрлехи ĕçсене шăпах вĕсен йĕркелесе ертсе пымалла.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

Симĕс ĕç çи – 2013

## Пĕрремĕш тоннăсем

Çĕр ĕçченĕ паян вырьăх апачĕ хатĕрлессипе тимлет. Ĕнерхи куна уяр çанталăкпа усă курса пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çĕнĕ утăн малтанхи тоннисене упрама хучĕç те.

«Путь Ильича» агрофирмăра ĕнерхи куна пĕр çул ӳсекен курăксене 50 гектар (33 процент) çулнă, 40 тонна (4 процент) çĕнĕ утă янтăланă.

## Çум курăкĕпе кĕрешеççĕ

Хресчен акнă-лартнă культурăсене тĕрĕс пăхса çитĕнтерессипе те çанă тавăрсах ĕçлет. Çĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсенче тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсен 52 процентне (7491 гектар) çум курăкĕнчен имçамланă. Кунпа пĕрлех 1240 гектарне (9 процент) тĕрлĕ сăтăрçăсенчен хӳтĕленĕ. Çирĕплетнĕ агрегатсем 605 гектар çинчи çĕр улмине пĕрремĕш хут чĕрсе-кăпкалатса тухнă.

**А. БЕЛОВ.**

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Çĕнтерӳçĕсем виççĕн

ЧР ял хуçалăх министерствин комиссийĕ федерацин «Ĕçе пуçăнакан фермер» программипе килĕшӳллĕн патшалăхран пулăшу илекенсен йышне пăхса тухнă. Конкурса 114-ăн хутшăннă. Комисси 94-шĕн бизнес проектне кăна йышăннă. Ыйтнине тивĕçтерменрен 20-шне тавăрса панă. Конкурса хутшăнма тивĕçнисем Муркаш районĕнчен 8-ăн.

Пĕлтĕр асăннă программăпа 51 фермера пĕрер млн тенкĕ парса пулăшнăччĕ. Кăçал 46-на уйăрнă. Вĕсем хушшинче пирĕн районтан: Алексей Петров, Дмитрий Смирнов тата Алина Афанасьева. Алексей Анатольевич пулăшупа усă курса ăратлă выльăх, ял хуçалăх техники туянасшăн, Алина Александровна хӳме, дезбарьер тăвасшăн, техника туянасшăн, Дмитрий Юрьевич вара Чăваш Енре халиччен питех тĕл пулман ĕçе явăçасшăн – шиншилла ĕрчетесшĕн. Вăл вăтам кролик пысăкăш, паха тирĕнчен кĕрĕк çĕлеççĕ.

## Лайăх енчен палăртнă

Шупашкар шыв хранилищин анлăшĕнче июнĕн 3 – 5-мĕшĕсенче Чăваш Республикинчи контртеррористла операцисене ертсе пыракан оперативлă штабăн вĕренĕвĕ иртнĕ. Унта çар техникипе авиаци те хутшăннă. Вĕренĕвĕн черетлĕ тапхăрĕ июнĕн 5-мĕшĕнче пирĕн районти Шашкар çывăхĕнче вĕçленнĕ, штабăн вăй структурисен ушкăнĕн ĕçĕсене тĕрĕсленĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев Шашкарта вĕренĕве йĕркелекенсемпе тĕл пулнă. Чăваш Республикинчи контртеррористла операцисене ертсе пыракан оперативлă штабăн представителĕсем район администрацийĕ вĕренĕве irттерме лайăх майсем туса панăшăн Ростислав Николаевича тав тунă, йĕркелӳ ĕçĕсене тивĕçлĕ шайра туса ирттернине палăртнă.

## Ĕççĕррисем – 50 çын

2013 çул пуçланнăранпа районти ĕçпе тивĕçтерекен центра юрăхлă ĕç шыраса 437 çын пынă. Ĕççĕррисем тесе официаллă майпа регистрациленисем вара июнĕн 3-мĕшĕ тĕлне 50 çын. Ĕççĕрлĕх шайĕ 0,25 процентпа танлашать. Ĕç паракансем (31) 167 ваканси сĕннĕ.

Кăçал çулталăк пуçланнăранпа яланлăх тата вăхăтлăх ĕçсене 395 çынна вырнаçтарнă. Обществăлла ĕçсене явăçтарнисем 65 çын, вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупса панă 14 – 18 çулсенчи çул çитмен çамрăксем – 192, вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупса панă ĕççĕррисем – 5 çын, Раççейăн ытти регионĕсенчи организацисене ĕçе вырнаçтарнисем – 7 çын, професси пĕлĕвĕ илме вĕренме янисем – 23 çын (вăл шутран ĕççĕррисем 16-ăн тата виçĕ çул тултарман ачисене пăхса пурăнакан хĕрарăмсем – 7-ĕн).

## Ытларах – арçын ачасем

Район администрацийĕн ЗАГС пайĕ май уйăхĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Иртнĕ уйăхра районĕпе пурĕ 32 ача çуралнă. Арçын ачасем 18 тата хĕр ачасем 14. Çак тапхăрта арçын ачасене ытларах чухне Константин, Дмитрий, хĕр ачасене Анастасия ят панă.

Май уйăхĕнче 6 ача тĕлĕшпе ашшĕлĕхне çирĕплетнĕ. Çемье çавăракансем 6 мăшăр пулнă.

Пурнăçран 44 çын уйрăлса кайнă. Вилнисем хушшинче 15 арçын тата 29 хĕрарăм, вĕсем вăтамран 56 тата 79 çулсенче пулнă.

Çемьесем арканни пирки суд йышăнăвĕ 8 кăларнă.

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Çырăнтару – 2013

## Çырăнмасăр ан юлăр!

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.**

**Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулар!**

Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене

# Ялти старостăсемпе депутатсем, пуçаруллăрах пулар!

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)**

**– Пурах пулĕ кун пеккисем ял тăрăхĕсенче?**

– Пуçаруллă çынсем пурри савăнтарать. Акă иртнĕ çулсенче Муркаш ял тăрăхĕ территорисене тирпей-илем кĕртессипе Раççей конкурсĕнче мала тухнăччĕ. Пĕлтĕр вара Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ республикăра 3-мĕш вырăна тивĕçрĕ. Паллă ĕнтĕ, çакă вăл вырăнти халăх шаннă ответлă ĕçченсен тăрăшулăхĕсĕр пулман. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Анатолий Лаптев Атикассинчи Игорь Прокопьев, Мăн Хураçкари Анатолий Лаврушкин старостăсен, Владимир Ильдуков депутатăн ĕçĕсене пысăка хуни пирки пĕлтерчĕ. Шупуçĕнчи Юлия Киселева, Владимир Яшмолкин депутатсем пирки те çав сăмахсенех каламалла.

Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Лев Павлов, Петр Степанов, Елена Алексеева депутатсем, Юнкă ял тăрăхĕнчи Алевтина Илугина, Николай Ядыков депутатсемпе Олег Аргандеев, Василий Илугин, Николай Яргунькин, Сергей Шишкин старостăсем те хăйсене шаннине тӳрре кăларассишĕн чылай тимлеççĕ. Ку ял тăрăхĕсен территорийĕсенче тирпей-илем кĕртес, пĕрлехи мероприятисем хатĕрлесе ирттерес енĕпе тăрăшнипе пĕрлех ытларах çĕрти пек хуçасăр юлнă шыв башнисене пăхса тăрассин, уйрăмах çу кунĕсенче ялсенче пурăнакансене шывпа йĕркеллĕ тивĕçтерессин тивĕçĕсене те вĕсем çине хунă.

Шыв-шур çурса каякан вырăнсене çирĕплетес, пĕвесене пăхса тăрас ĕçсене те халăхпа йĕркелемесĕр май çук. Москакасси ял тăрăхĕнчи Ахмане ялĕнчи Петр Волков староста ку енĕпе ырă сăмаха тивĕç. Çынсен шанăçне пĕрремĕш хут кăна тивĕçрĕ пулин те, питĕ активлă. Вăл йĕркеленипе пĕве пуçĕсене хăпартса çирĕплетес, юрăхсăра тухнă карта-хӳме тавраşне йĕркене кĕртес ĕçсене япăх мар туса пыраççĕ, ял патне пыракан çулсене майлаштарассипе те вăй хураççĕ. Любовь Ванюшкина, Олег Захаров, Светлана Крылова депутатсем, Роза Парандеевăпа Ольга Данилова старостăсем те – пĕрлехи ĕçсен йĕркелӳçисем. Кун пек пуçаруллă депутатсенчен Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Алим Андриянова, Алексей Сухова, Юрий Енисеева, Александр Шишкина та асăнса хăвармалла. Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Катăкуйĕнчи Анатолий Васильев депутат тăрăшнипе ял çыннисем парк лартса чĕртрĕç, пĕве пуçĕсене юсарĕç, çулсене юсаса тухма палăртаççĕ.

**– Юлашки вăхăтра чăвашсен авалхи ырă йăлисем пурнăça кĕрсе пынă саманта палăртнă пулăттăм. Сăмах вырăнсенче ял уявĕсене ирттерни пирки.**

– Çулталăкра пĕрре ирттерекен çакăн пек пысăк уявсенче йĕркелӳçĕсĕр май çук. Ытларах чухне кунта шăпах ĕнтĕ депутатсен, ытти активистсен пуçарулăхпа активлăх кăтартма тивет. Ку енĕпе Оринисене асăнса хăвармасăр май çук. Ял тăрăхĕ 14 яла пĕрлештерсе тăрать пулсан, 12 ялта çуллен ял уявĕсене йĕркелеççĕ. Пĕрле пухăнса савăнма пĕлни, ĕç паттăрĕсене чыслани, ватăсене сума суни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Михаил Просов, Анатолий Казамбаев, Светлана Вязова депутатсем, Регина Быкова, Вадим Васильев старостăсем пирки ку тĕлĕшпе ыррине кăна каламалла. Ытти ял тăрăхĕсенче те чылай çĕрте кун пек хаваслă, илемлĕ ял кунĕсем йĕркелеççĕ. Çынсем пĕрле пухăнса тулли кăмăлпа савăнаççĕ, тăрăшарах ĕçлеме хавал илеççĕ. Тепĕр пĕлтерĕшлĕ самант – ку мероприятисем çынсене пĕтĕçтереççĕ, туслаштараççĕ, хутшăнусене çирĕплетеççĕ.

**– Ачалăх, çемьери хутшăнусен ыйтăвĕсем чи кăткăссисенчен пĕрисем пулĕ. Апла пулин те ăнăçсăр, йĕркеллĕ мар лару-тăруллă çемьесене асăрхамасăр хăварма юрамасть. Тĕрĕссипе кун пек çемьесенче чи малтанах тимлĕхсĕр юлнă ачасем шар кураççĕ.**

– Кун пек çемьесем нумай теместĕп, çапах та вĕсем çук мар. Вĕсене пурне те ял тăрăхĕсенче шута илнĕ, ответлисене çирĕплетнĕ. Вăхăтран вăхăта лару-тăрăва çул çитменнисемпе ĕçлекен комисси ларăвĕсенче сӳтсе яваççĕ.

Кашни çемье – хăйне уйрăм тĕнче. Вĕсемпе ĕçлессине те çавна тĕпе хурса пĕлсе йĕркелес пулать. Ку енĕпе Ильинка ял тăрăхĕнчи Надежда Иванова, Альбина Иванова, Игорь Каргин депутатсене палăртнă пулăттăм. Вĕрентӳ ĕçĕнче вăй хуракансен психолог та, ăс паракан аслă юлташ та, хĕтĕртекен те пулма тивет. Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Римма Кириллова, Валентина Игнатьева депутатсем те çемьесемпе ĕçлессинче пысăк опыт пухнă, ытти ĕçсенче те пуçаруллă. Ваçкассинчи Михаил Иванов депутат та обществăлла ĕçре хастар пулнипе хисепе тивĕçлĕ.

**– Лилия Юрьевна, юлашки çулсенче сывă пурнăç йĕркисене çирĕплетесси, физкультурăпа спорта аталантарасси, спорт ăмăртăвĕсене çынсене ытларах явăçтарасси пирки нумай калаçатпăр. Усси пур-и, калаçни калаçупа кăна иртсе каймасть-и?**

– Массăллă спорт ăмăртăвĕсене вырăнсенче юлашки вăхăтра ытларах ирттерме тытăнни куç кĕрет. Паллă ĕнтĕ, çакăнтан сăтăр пулас çук, усă кăна. Спортпа туслă çын ĕçре те ăнăçуллăрах. Чылай спорт ăмăртăвĕсем юлашки вăхăтра пуçласа кун çути курчĕç. Вĕсене йĕркелекенсем хушшинче уйрăм çынсем те, предприятисемпе организацисем те. Акă иртнĕ çул кашни ял тăрăхĕнчех ял тăрăхĕсен командисем хушшинче спортăн ку е вăл енĕпе ăмăртусем йĕркелеме пуçăнтăмăр. Командăсен шутĕнче администраци ĕçченĕсем те, депутатсем те. Ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе Муркаш, Мăн Сĕнтĕр, Шетмĕпуç ял тăрăхĕсенче иртекен ăмăртусем массăлăхпа палăрса тăраççĕ.

Вырăнсенче Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Сарчакри Александр Нестеров пек спорт пуçаруçисем пурри малашлăхра пысăк шанăç çуратать. Вăл хăйĕн шĕллĕ Константин ячĕпе футболла выляссипе çулленхи ăмăртусем йĕркелесе ячĕ.

**– Калаçăва вĕçленĕ май юлашкинчен мĕн калас кăмăл пур?**

– Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене те, депутатсене те вырăнти халăх суйланă, старостăсем пулма та халăх шанăçне тивĕçнисене çирĕплетнĕ. Апла пулсан çак шанăça тӳрре кăларассишĕн вăй-хала шеллемелле мар. Пĕччен хулă хуçăлать теççĕ. Пĕрлехи вăйпа вара пур йывăрлăха та парăнтарма пулатех.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Рейтинг ыйтăвĕсемпе

# Тĕрĕс хак пани кирлĕ

РФ Президенчĕн Атăлçи федераци округĕнчи полномочнăй представителĕ Михаил Бабич шухăшĕпе Раççей регионсен аталанăвĕн министерстви субъектсене рейтинглама туса хатĕрленĕ çĕнĕ системăра сĕннĕ пур критерисене те чăнлăхпа тӳр килеççĕ теме çук. Специалистсем, регионсем хушшинче те кун пирки пĕр шухăшлăх çук. Çапла пĕлтернĕ полпред Атăлçи федераци округĕн журналисчĕсемпе ирттернĕ пресс-конференцире федерацин регионсен ĕç тăвакан влаç органĕсен ĕçĕн эффективлăхне хак пама туса хатĕрленĕ тĕпрен улăштарнă çĕнĕ методики пирки.

Михаил Бабич палăртнă тăрăх çĕнĕ хаклавра регионсен шутне, экономика потенциалĕсене, малтанхи экономика условийĕсене шута илмен: «Пурне те пĕр рете тăратнă». Хак пани объективлă пултăр тесен регионсене ушкăнсене уйăрса тухас пулать.

Çĕнĕ рейтинг системи пирки Чăваш Ен влаç органĕсен представителĕсем брифинг та пухнă. Юлашки 5 çул хушшинче Чăваш Ен пуçласа ăнăçлă 10 регион шутне кĕреймен: 2012 çул итогĕсемпе 42-мĕш вырăна анса ларнă. Енчен те хак панă чухне унччен бюджет укçи-тенкипе эффективлă усă курасси çине ытларах тимлĕх уйăрнă пулсан, халĕ вара умĕнхи тапхăрпа танлаштарсан кăтартусем мĕн чухлĕ пысăкланнине тĕп вырăна хураççĕ. «Унччененех пысăк шая çитме пултарнă регионсен вара кăтартусене вĕçĕм ун пекех хăвăртлăхпа ӳстерсе пыма май çук», – тенĕ Чăваш Ен премьер-министрĕ Иван Моторин.

REGNUM информаци агентстви унччененех пĕлтернĕччĕ, Раççей Правительстви иртнĕ çул регионсенчи влаç органĕсен ĕçне-хĕлне хак памалли çĕнĕ системăна пурнăça кĕртнĕ. Енчен те унччен 74 кăтартăва шута илнĕ пулсан, халĕ эффективлăха 12 кăтартупа палăртаççĕ. Вăл шутра демографи тата инвестици лару-тăрăвне, ĕççĕрлĕх тата çынсен тупăш шайне, çурт-йĕр строительствин кăтартăвĕсене шута илеççĕ.

**REGNUM ИА.**

Универсиада – 2013

# Факел Шупашкара çитет

Хусанта иртекен Универсиада факелĕ çĕр-шывăн 30 ытла регионĕ урлă кăна иртет. Чăваш Ене вăл июнĕн 10-мĕшĕнче Йошкар-Оларан çитет.

Шупашкарта факелăн çулĕ 5 çухрăм тăсăлать. Малтанласа палăртнă тăрăх унпа иртекенсен маршручĕ чукун çул вокзалĕ çывăхĕнчен 15 сехет те 45 минутра пуçланать те Хĕрлĕ площадьре 17 сехетре вĕçленет. Факелпа пыракансем 40 çын (вĕсем хушшинче чи лайăх студентсемпе преподавательсем) тата мероприятие хутшăнакан 290 волонтер пулассине пĕлтернĕ.

Аса илтеретпĕр, пĕтĕм тĕнчери çуллахи Универсиада Хусанта июлĕн 6–17-мĕшĕсенче иртет.

Республикăра

# «Молгород» 5 çăлтăр»

Регионсем хушшинчи «Молгород» çамрăксен вĕренӳ форумĕ кăçалхипе пиллĕкмĕш хут иртет. Çавăнпа та йĕркелӳçĕсем ăна çӳллĕ шайра ирттерме хатĕрленсе «пилĕк çăлтăр» статусне панă.

Çамрăксем ултă кун тăсăлакан форумра чылай çĕннине пĕлме пултараççĕ: республикăри экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕ ырă çине витĕм кӳрекен программăсемпе паллашнинчен пуçласа форум ĕçне кĕртнĕ ятарлă программăсемпе проектсем таранах.

Кăçалхи форума та пирĕн районти хастар çамрăксем хутшăнаççĕ. Унта вĕренни-илтнине вĕсем районти çамрăксем патне çитерессе шанатпăр.

# Çăмăл атлетсем ăмăртаççĕ

Июнĕн 8–9-мĕшĕсенче Раççейре хăвăрт утассипе мала тухассишĕн тата чемпион пулассишĕн Шупашкарта çăмăл атлетсем ăмăртаççĕ.

300-е яхăн спортсмен Шупашкар заливĕ хĕрринче иртекен ăмăртусене хутшăнать. Унта тĕрлĕ ӳсĕмсенчи арçынсемпе хĕрарăмсем тупăшĕç. Дистанцисем те тĕрлĕрен – 5 çухрăмран пуçласа 50 çухрăм таранах. Хĕрӳ ăмăрту кăтартăвĕсем спортсменсен малашнехи утăмĕсем çине те витĕм кӳреççĕ: çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командисене лекесси, ытти шайри ăмăртусене хутшăнасси те çак стартпа çыхăннă.

Ăмăртусене çитсе курма сĕнетпĕр.

# Кадет училищи кĕтет

Ачăр анлă та тарăн пĕлӳ илтĕр, икĕ ют çĕр-шыв чĕлхи пĕлтĕр, ытти енлĕ пултарулăха аталантартăр тетĕр-и? Апла пулсан Оренбургри президент кадет училищине çул тытăр. Унта 4 класс пĕтернĕ арçын ачасене вĕренме кĕмелли тĕрĕслев (вырăс чĕлхипе, математикăпа, ют çĕр-шыв чĕлхипе) тата ачан спортпа ытти енлĕ пултарулăхĕпе паллашнă хыççăн вĕренме илеççĕ.

Çак кадет училищи инноваци вĕренӳ учрежденийĕ шутланать. Унта малашлăхра патшалăх службине тата çар ĕçне суйласа илекен çамрăксене вĕрентсе кăлараççĕ. Училищĕре тĕрлĕ енлĕ аталанма майсем питĕ нумай. Кунпа тĕплĕнрех училище сайтĕнче паллашма е 8(83532)34-25-52 тата 34-25-77 «хĕрӳ лини» номерĕсемпе шăнкăравласа ыйтса пĕлме пулать.

Саламлатпăр

Оринин ял тăрăхĕнчи Çеменкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, кунтах пурăнакан, тăван ен аталанăвне пысăк тӳпе хывнă **Валерий Иванович ВЯЗОВА** çуралнă кунĕпе саламлатпăр. Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Оринин ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕн ертӳçи пулнă май вăл обществăлла пурнăçри кирек хăш ыйтăва та яланах вăхăтра татса пама тăрăшать. Усă кăмăллă та ялан тараватскерне татах нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр. Яваплă нумай ĕçре вăй хутăн, анчах ятна çухатмарăн, тăван ене манмарăн. Тавах сана эсĕ юнашар пулнишĕн, пулăшма хатĕр тăнишĕн!

**Саламлаканĕсем: Оринин ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕ, кунта пурăнакан ватă çынсем.**

Усă калаçу

# Кама мĕн канăç памасть

**Июнĕн 5-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Федераци Правительствин Председателĕн Дмитрий Медведевăн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче çынсене харпăр хăй ыйтăвĕпе йышăннă.**

Чăваш чĕлхипе литература кĕнекин авторĕ Галина Абрамова вырăс шкулĕсенче 10 – 11-мĕш классенче вĕренекенсем валли чăваш литературин кĕнекине чăвашла кăларма май пурри пирки интересленнĕ. Шкулта ачасене чăваш литературине вырăсла вĕрентеççĕ. Михаил Игнатьев ыйтăва хуравланă май çакă патшалăхăн вĕренӳ стандарчĕпе тӳр килнипе килменнине тишкермеллине палăртнă. Сăмах май республикăра тăван чĕлхене 313 шкулта вĕрентеççĕ. «Тăван енре кашни ача чăваш чĕлхипе пĕлсе калаçма пултартăр», – тесе чĕнсе каланă республика Пуçлăхĕ.

Шупашкар хулинче пурăнакан Лидия Василенковăна çынсене турттаракан транспорт çинчи хаксем кăсăклантарнă. Вăл 249-мĕш маршрутлă автобус хулари масар патĕнчен иртсе çӳренине пĕлтернĕ, масара çӳрекенсем валли билет хакне кăштах та пулин пĕчĕклетме май пуррипе интересленнĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ палăртнă маршрутпа çӳрекенсем валли православи уявĕсем вăхăтĕнче пĕчĕкрех хаксем тума вырăнти администраци бюджетĕнче укçатенкĕ пăхса хăварма сĕннĕ.

Шупашкар хулинчи Красноармейски урамĕнче пурăнакан Татьяна Лазарева «Центр» микрорайон пуласлăхĕн, Элĕк районĕнче пурăнакан Юрий Филиппов çĕнĕ урамсене эектричество çути, Шупашкар районĕнче пурăнакан Александа Хрисанова ялта шыв кĕртессин ыйтăвĕсене çĕкленĕ. Михаил Васильевич ыйтусене майлă татса пама шантарнă.

Çĕнĕ портал

# Конституци 20 çул тултарать

2013 çулхи декабрь уйăхĕнче Раççей Федерацийĕн Конституцине йышăннăранпа 20 çул çитет. Çак кун ячĕпе çĕр-шывра çамрăксен «12 Декабря.ru» çут ĕç порталне йĕркеленĕ. Интернет-проект тĕллевĕ – Раççейăн тĕп саккунне ачасемпе çамрăксем хушшинче анлăрах сарасси.

Хальхи вăхăтра Конституци пирки йĕркеленĕ сайтсем пĕрре кăна мар. Анчах та ытларахăшĕ вĕсем уйрăм професси ушкăнĕсем валли хатĕрленĕскерсем, пуриншĕн интереслĕ мар. Çĕнĕ проектра информацие вырнаçтарни хăйне евĕр. Конституци статйисене икĕ вариантпа илсе панă: туллин тата кĕскен.

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ – çĕр-шывăн чи аслă норматив право акчĕ. Ăна 1993 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче пĕтĕм халăх сасăлавне ирттерсе йышăннă. Официаллă пичетлесе кăларнăранпа – 1993 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче вăя кĕнĕ. Конституцин чи пысăк юридици вăйĕ, вăл Раççей Конституци стройĕн, патшалăх йĕркеленĕвĕн тĕп енĕсене, халăх суйлакан, ĕç тăвакан, суд влаç органĕсене йĕркелессине тата вырăнти хăй тытăмлăх системине, çыннăн тата гражданинăн прависемпе ирĕклĕхĕсене çирĕплетет.

Универсаллă электрон карттăсем

# Заявлени паракансем – 1600 ытла çын

Чăваш Енре универсаллă электрон карттăсем (УЭК) илме кăмăл тăвакансенчен ытларахăшĕ 24 çултан тытăнса 40 çула çитиччченхисем. УЭК илме заявлени паракансем хушшинче вĕсем 57 процент. 55 çула çитиччченхисем 28 процент. Ватă çынсем те картта илме тăрăшаççĕ. Заявлени панисенчен 9 проценчĕ – пенсионерсем. Заявлени паракансенчен чи асли 86 çулта, чи кĕçĕнни 16-ра. Шкул ачисемпе студентсем 6 процент йышăнаççĕ.

Июнĕн 3-мĕшĕ тĕлне республикăра 450 çын УЭК илнĕ. Пĕтĕмпе кăçал çулталăк пуçланнăранпа вара 1600 ытла çын электрон картта илме кăмăл тунă.

Аса илтеретпĕр, апрелĕн 1-мĕшĕнче çĕр-шыв регионĕсем хушшинче чи малтисенчен пĕри пирĕн республикăра УЭК-ăн транспорт хушăмĕпе усă курма тытăннă. Унпа халĕ Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче кăна мар, республика территорийĕпех усă кураççĕ.

Чăваш Енре универсаллă электрон карттăсене пурнăça кĕртессин опытне «УЭК» ОАО федераци уполномоченнăй организацийĕн представителĕсем пысăк хак панă. Халĕ вара республикăна УЭК-ăн медицина хушăмне пурнăça кĕртессипе пилот регионĕ туса хурас ыйтăва сӳтсе яваççĕ.

# Çыннисем сăпайлă, ĕçĕ – пĕлтерĕшлĕ



Паян – Социаллă ĕçченĕн кунĕ

***Паян пирĕн çĕр-шывра Социаллă ĕçченĕн кунне паллă тăваççĕ. Çак уяв социаллă ĕçченсем пекех – сăпайлă. Нумайăшĕ вĕсене кирлĕ чухлĕ тимлĕх те уйăрмасть. Социаллă ĕçченсем вара пысăк хисепе тивĕç. Пулăшу кирлисен сывлăхĕшĕн, тăнăçлăхĕшĕн хăйсем çине ответлăх илни кăна мĕне тăрать.***

***Уяв умĕн социаллă ĕçченсем пирки калаçма тесе эпир ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин Муркашри халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центр ертӳçипе О. ИВАНОВĂПА тĕл пултăмăр.***

**– Ольга Васильевна, халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центр пулăшу кирлисене мĕнле услугăсем парса пулăшать?**

– Пирĕн центр кӳрекен пулăшу тĕрлĕ енлĕ. Чи малтанах вăл – ватă çынсене, инвалидсене килте пулăшса тăни. Вĕсен йăлара кунран-кун тухса тăракан ыйтăвĕсене тивĕçтерессси: лавккаран апат-çимĕç продукчĕсене е урăх япала илсе килсе пани, хуçалăхри ытти нумай ĕçе туса пыма пулăшни.

Пулăшăвăн тепĕр енĕ медицина пулăшăвĕпе çыхăннă: диспансеризаци тăма пулăшасси, больницăна илсе çӳресси, стационарта сипленекен ватă çын патне пырса çӳресси, техника хатĕрĕсемпе тивĕçтересси тата çакна майлă ытти ĕçсем пурнăçласси. Пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшу парасси те эпир тивĕçтерекен услугăсен йышĕнче пур. Хамăр пăхса тăракан ватăсене тĕрлĕ кружок ĕçне, ытти тĕрлĕ занятисене явăçтарасси те – пирĕн тивĕç.

**– Тĕрлĕ енлĕ консультацисем парасси эсир паракан пулăшу шутне кĕрет-и?**

– Эпир консультаци парассипе те ĕçлетпĕр. Ĕç хучĕсене тĕрĕс хатĕрлеме ятарлă консультацисем парса та пулăшатпăр, хамăр компетенцие кура граждансен саккунпа палăртнă хăш-пĕр категорийĕсене тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ те кӳме пултаратпăр. Психологи тĕлĕшĕнчи консультацисем парасси те эпир куллен пурнăçлакан ĕç шутланать.

Ытти енлĕ пулăшу пирки те каласа хăвармалла. Эпир инвалид ачасене харпăр хăйĕн реабилитаци программипе пăхса хунă тăрăх кирлĕ хатĕрсемпе тивĕçтеретпĕр. Йывăр лару-тăрăва лекнĕ ватăсене интернат çурчĕсене вырнаçтарма пулăшатпăр. Хăшĕсене васкавлă социаллă пулăшу кирлĕ пулать – вĕсемпе уйрăммăн ĕçлетпĕр.

**– Пулăшу тĕрлĕ енлĕ пулни куç кĕрет. Çак пулăшупа хальхи вăхăтра миçе çынна тивĕçтеретĕр-ха? Ку тĕлĕшпе миçе социаллă ĕçчен тимлет?**

– Пирĕн центрта штатра тăракан социаллă ĕçченсем тăваттăн. Вĕсем ватăсемпе инвалидсен Мăн Сĕнтĕрти вăхăтлăх пурăнмалли çуртĕнче вăй хураççĕ. Паллах, çак коллективăн ертӳçи те пур.

Ытти социаллă ĕçченсем вара – штатра тăманнисем. Вĕсем паянхи куна 92 çын, пĕччен пурăнакан 110 ватăна пăхса пулăшса тăраççĕ.

**– Социаллă ĕçченĕн пĕтĕмĕшле илнĕ паха енĕсене хăшĕсене палăртнă пулăттăр?**

– Пирĕн социаллă ĕçчен вăл – ăшă кăмăллă, çыннăн хуйхи-суйхине ăнланма, тепĕр çынна итлеме тата пулăшма пултаракан çын. Çак ĕçе ырă кăмăллă та çемçе чунлă çын кăна пурнăçлама пултарать тесе шутлатăп.

**– Социаллă ĕçчен пулма пирĕн республикăра ăçта ятарлă пĕлӳ илме пулать?**

– Раççей патшалăх социаллă университечĕн Шупашкарти филиалĕ социаллă сферăра ĕçлеме пултаракан специалистсене вĕрентсе хатĕрлет. Сăмахран, эпĕ хам та çавăнта вĕреннĕ. Социаллă ĕçченсем хăйсен ăсталăхне те кунта йĕркелекен курссенче ӳстереççĕ.

**– Социаллă ĕçченĕн статусĕ пирки мĕн шутлатăр?**

– Паллах, социаллă ĕçченсен тӳпи обществăшăн пĕлтерĕшлĕ тесе калас килет. Çĕр-шыв шайĕнче професси уявне çирĕплетни вара статус ӳснине, пирĕн сферăна та патшалăх тимлĕхсĕр хăварманнинех пĕлтерет. Социаллă ĕçченсен ĕç укçине ӳстерсе пыни те çакнах ĕнентерет. Çавăнпа та пирĕн пуç усмалла мар. Хамăр çине илнĕ ответлăха пурнăçлама пур социаллă ĕçчене те ырă сывлăхпа тăнăçлăх тату пурнăçпа чăтăмлăх сунатăп.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Спорт

## Муркаш районĕн кубокне çĕнсе илме

Районти предприятисенче, учрежденисемпе организацисенче тата ял тăрăхĕсенче йĕркеленĕ футбол командисенче июнĕн 12-мĕшĕнче район кубокне çĕнсе илме май пур. Ăмăртуччен маларах, июнĕн 10-мĕшĕнче (район администрацийĕн методика пӳлĕмĕнче 10 сехетре), шăпа янă тăрăх вăйăсем мĕнле иртесси паллă пулĕ.

Ăмăртăва Муркаш районĕнче пурăнакансем (прописка тăрăх) тата кунта çуралса ӳснисем кăна хутшăнма пултараççĕ. Çавăнпа та паспорт пулни чăрмантармасть. Ют вылякан пулсан команда 0:3 шутпа выляса янине çирĕплетеççĕ.

Ăмăртăва хутшăнмалли заявкăна шăпа янă кун йышăнаççĕ. Футбол вăййисем июнĕн 12-мĕшĕнче 19 сехетре пуçланаççĕ. Вăйăсем ăçта иртесси шăпа янă чух паллă пулать. Кун пирки хаçатăн çитес номерĕнче пĕлтеретпĕр.

**Район администрацийĕн спортпа туризм секторĕ.**

Пирĕн пата çыраççĕ

## Умра – çулла, каникул

Акă вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ те ĕнтĕ. Вăл питĕ хăвăрт та сисĕнмесĕр иртсе кайрĕ. Умра – çулла, каникул.

Çу уйăхĕн 30-мĕшĕнче пирĕн шкулта савăнăçлă уяв пулчĕ: вĕренӳ çулĕ вĕçленнине савăнăçлă лару-тăрура паллă турăмăр. Икĕ урок вĕреннĕ хыççăн тĕрлĕ вăйăсем пуçланчĕç. Вăйăсене хатĕрлекенсем, 10-мĕш класра вĕренекенсем, пире тĕрлĕ енлĕ тĕрĕслерĕç: юрă-ташăра, спортра, пĕлӳ тĕлĕшĕпе те.

Мана ытларах ташă станцийĕнче килĕшрĕ. Тĕрлĕ кĕвĕпе ташлама тиврĕ. 10 класри Наташа Клементьева епле маттурринчен тĕлĕнтĕмĕр, ун пек ташлама тăрăшрăмăр.

Вăйăсем хыççăн пĕтĕмлетӳ линейки иртрĕ. Вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыракансене, спортра ăнăçу тунисене, шкул тата район пурнăçне активлă хутшăннисене грамотăсемпе дипломсем парса чысларĕç. Шкул директорĕ В. Васильев пире пурне те саламласа малашне те хастар пулма сĕнчĕ.

**Надежда ТИХОНОВА,Чуманкассинчи вăтам шкулта 4-мĕш класра вĕренекен.**

Каникул тата хăрушсăрлăх

## Асăрхаттару ытлашши пулмĕ

Хула тулашĕнчи лагерьсенче пĕрремĕш смена пуçланчĕ ĕнтĕ. Çулсеренех каникул вăхăтĕнче унта пирĕн районти чылай ача канма тата сывлăха çирĕплетме кăмăллать.

21 кун кĕске вăхăт мар, çавăнпа та канмалли кунсенче ашшĕ-амăшĕсем ачисене курма хаваспах тухса килеççĕ. Лагерьте тĕрлĕ лару-тăру пулма пултарать, апла пулсан кашни каймассеренех ачасене хăрушсăрлăх пирки аса илтермелле.

Хаклă йышши япаласене унта илсе кайма тăрăшмалла мар. Илсе кайнă пулсан вара вĕсене упрама вожатăйсене шанса парсан лăпкăрах пулĕ. Кĕсье телефонĕ пирки те çавнах каламалла.

Лагерьтен аслисене асăрхаттармасăр, пĕлтермесĕр тухса каймалла марри пирки, пирус е алкоголь продукцине илсе пымалла марри çинчен те ачăрсене çирĕп асăрхаттарса хăварăр. Тĕлĕнмелле, анчах та хăш-пĕр аслисем лагере эрех-сăра илсе пынă тĕслĕхсем те пулнă.

Лагерьте кирек мĕнле ыйту тухсан та тӳрех вожатăйсемпе сӳтсе явмалла.

**Çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделени.**

ГИБДД асăрхаттарать

## Çул-йĕр çинче тимлĕх кирлĕ

Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн теми кирек кампа калаçнă чухне те – çамрăксемпе е аслă ăрурисемпе те, çуран çӳрекенсемпе е водительсемпе те – хăйĕн çивĕчлĕхне çухатмасть, мĕншĕн тесен вăл пирĕн пурнăçпа çыхăннă.

Аварисенче ачасем вилни, суранланни пăшăрхантарать. Çавăнпах çуллахи каникул умĕн, майăн 20-мĕшĕнче, «Внимание – дети!» асăрхаттару мероприятийĕ пуçланчĕ. Кулленхи ĕçре кашни кунах йĕрке пирки асăрхаттаратпăр, ку тапхăрта вара – июнĕн 10-мĕшĕччен – ачасене хăрушсăрлăх пиçиххийĕсемпе усă курмаллине, тумтир çинче çутта каялла сирекен хăю е ытти япала пулмаллине тепĕр хут аса илтеретпĕр. Вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ май ашшĕ-амăшĕсемпе тĕл пулса ачисене тимлĕх ытларах уйăрмалли пирки çирĕплетсе калатпăр. Çакă ăнсăртран мар: иртнĕ тăватă уйăхра кăна пирĕн республикăра çул-йĕр çинчи инкексенче 2 ача вилчĕ, 55-ĕн суранланчĕç.

**С. ИВАНОВ,**

**ГИБДД районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

## Сывă пул, пуçламăш шкул!

Вĕренӳ çулĕ вĕçленсе пырать. Сисмесĕрех 4 çул та иртсе кайрĕ. Паян эпир пуçламăш шкулпа сыв пуллашатпăр. Çав ятпа пирĕн класра «Сывă пул, пуçламăш шкул!» уяв иртрĕ. Уявра эпир пĕтĕмлетӳсем турăмăр, хамăра вĕрентнĕ класс ертӳçине, В. Федоровăна, ытти учительсене, атте-аннесене тав сăмахĕ каларăмăр, юрларăмăр, ташларăмăр. Уява шкул директорĕ те хутшăнчĕ. Вăл пире пуçламăш шкул пĕтернине ĕнентерекен диплом, хастар пулнă ачасене Хисеп грамотисем, ашшĕ-амăшĕсене Тав çырăвĕсем парса чысларĕ.

Уяв малалла тăсăлчĕ. Эпир пурте çывăхри вăрмана кайрăмăр. Уçă сывлăшри тутлă апат, атте-аннесемпе ирттернĕ интереслĕ вăйăсем нумай вăхăта асра юлĕç.

**Майя ИЛЛАРИОНОВА,**

**Чуманкассинчи вăтам шкулта 4-мĕш класра вĕренекен.**

## Раççей конкурсĕнчен – çĕнтерӳпе

Нумаях пулмасть Калайкассинчи вăтам шкула ырă хыпар çитрĕ. Кунти пуçламăш классене вĕрентекенсен «Асамат» пĕрлешĕвĕ Тутарстанри Набережные Челны хулинче иртнĕ «Педагогика пĕрлешĕвĕсен ăмăртăвĕ» конкурсра çĕнтерӳçĕ пулма тивĕçнĕ.

Пуçламăш классене вĕрентекенсен професси ăсталăхĕпе компетенцине аталантарма, методика пĕрлешĕвĕсен ĕçне пĕтĕмлетме, çĕнĕлле ĕçленин опытне пĕрпĕрин хушшинче анлă сарма йĕркеленĕ конкурса 116 пĕрлешӳ хутшăннă. Чăваш Республикин вĕренӳ институтĕнчи Н. Иванова доцент ертсе пынипе пирĕн «Асамат» виççĕмĕш вырăн йышăнма пултарнă.

**Г. ШАДРИНА,**

**пуçламăш классен вĕрентекенĕ.**

# Лагерьте хаваслă – ачасем кăмăллă

Çуллахи вăхăтра шкул çумĕнчи лагерьсенче пурнăç вĕресе кăна тăрать: хăйсем кăмăллакан лагерьсене ачасем хаваспах çӳреççĕ.

Акă Орининти вăтам шкулти сывлăха çирĕплетмелли «Лучики» лагере 50 ача таран çӳрет, экологи енне суйласа илнĕ «Факел» профиль лагерне – 20. Иккĕмĕш сменăра та профиль лагерĕн ĕçне палăртса хунă.

Ачасене апатлану та, кун йĕрки те тивĕçтерет. Апатланупа кăсăклансан, вĕсем сыр, хăяр, помидор, пулă, тĕрлĕ сĕткен – мĕн кăна çитермеççĕ пулĕ тесе хаваспах пĕлтерчĕç. Ашшĕ-амăшĕсем те ачисем çуллахи вăхăтра шкул лагерĕсене çӳренипе кăмăллă пулнине воспитательсене пĕлтерме ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ.

«Паян сиплĕ курăксем пухрăмăр, вĕсене хатĕрлев кантурĕсене парас тетпĕр, анчах та Муркашра курăка типĕтнĕ хыççăн кăна илеççĕмĕн. Пирĕншĕн ку меллĕ мар – типĕтме вырăн çителĕксĕртерех», – пăшăрхансарах палăртаççĕ воспитательсем.

Çак лару-тăрăва уçăмлатас тесе комиссии секретарĕ Л. Петрова Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсемпе çийĕнчех телефонпа çыхăнчĕ.



Сиплĕ курăк пухсан Орининсем малашне иртерех Мăн Сĕнтĕр райповне шăнкăравлама йышăнчĕç – унта курăка чĕрĕлле те йышăнма май пур иккен. Ачасемшĕн вара хурăн çулçи е вĕлтĕрен пухма çăмăлрах та меллĕрех пулнине те ăнлантарчĕç.

Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе



Комисси председателĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова ачасемпе инструктаж мĕнле ирттернипе кăсăкланчĕ, хăрушсăрлăх пирки тăтăшах аса илтерни вырăнлине те палăртрĕ. «Хăвăрах пĕлетĕр, çул-йĕр çинче те, ытти вырăнта та лару-тăру питĕ сыхă пулма хистет. Ачасене çухатас марччĕ», – çапла асăрхаттарчĕ вăл.

Районти шкулсем çумĕнчи лагерьсене йывăр лару-тăрулла, нумай ачаллă çемьесенче ӳсекен ачасене явăçтарасси хăрушсăрлăх, йĕркелĕх тĕлĕшĕнчен питĕ пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Çакăнпа та кăсăкланчĕç çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комисси членĕсем. Орининти вăтам шкулта ку тĕлĕшпе ĕçе тĕрĕс йĕркелени палăрчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА**

**сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Юнкăсем – малтисен йышĕнче

А. Николаев космонавт летчик ячĕллĕ кубока çĕнсе илессишĕн республикăра çулсеренех иртекен спартакиадăра Муркаш районĕнчи шкул ачисем яланах хастарлăхпа палăраççĕ.

Нумаях пулмасть çак 9-мĕш спартакиада шучĕпе Комсомольски салинче ракетомодель спорт енĕпе ăмăрту иртрĕ. Чăваш Енри ытти çамрăк спортсменсемпе пĕрле унта çамрăк техниксен станцийĕн Юнкăри вăтам шкулти воспитанникĕсем тата çак шкулти çамрăк космонавтсен отрячĕ хутшăнчĕç. Ачасене пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ Ю. Самушков тата И. Киршева хавхалантарса пыраççĕ.

Уйрăм зачетсенче Лев Романов, Михаил Киршев, Дмитрий Ильин, Анастасия Киршева, Даниил Шурнеев палăрма пултарчĕç. Пирĕн команда пĕтĕмĕшле кăтартупа иккĕмĕш вырăна тивĕçрĕ.

**И. КИРШЕВА.**

Шалти ĕçсен пайĕнче

## Ыйтусемпе йышăнаççĕ

Июнĕн 13–22-мĕшĕсенче районти шалти ĕçсен пайĕн служба ĕçне тĕрĕслес тĕллевпе Муркаша Чăваш Республики тăрăх Шалти ĕçсен министерствин ертӳçисем килеççĕ. Çак тĕрĕслев вăхăтĕнче – июнĕн 13–15-мĕшĕсенче – вĕсем пирĕн районти çынсене ыйтусемпе те йышăнаççĕ. Апла пулсан кăсăклантаракан ыйтусемпе ĕç кунĕ вăхăтĕнче шалти ĕçсен пайне çитсе килме ан манăр.

**Шалти ĕçсен пайĕн штабĕ.**

# Малашне пенси системи мĕнле пулĕ?

**Стратеги**

## СТРАТЕГИ ТĔЛЛЕВĔСЕМПЕ ЗАДАЧИСЕМ

***Раççей Федерацийĕн пенси системине нумай вăхăтлăх тапхăрта аталантармалли Стратегие РФ Президенчĕн 2012 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи 597 № Указĕпе килĕшӳллĕн туса хатĕрленĕ тата РФ Правительствин 2012 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнчи 2524-р № йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ. Документа сӳтсе явнă çĕре РФ Экономика министерствипе РФ Финанс министерстви хутшăннă, Стратеги проектне анлăн сӳтсе явса унта улшăнусем кĕртме тивнĕ.***

Стратеги туса хатĕрлесси экономика тата демографи сăлтавĕсемпе, тарифпа бюджет политики тĕлĕшĕнче шайлашулăх пулманнипе, пенси системин пухăнакан пайĕн тăнăçлăхĕ çуккипе çыхăннă.

Стратеги Раççейре пенси системине 2030 çулччenхи тапхăрта аталантарассин задачисене палăртать. **Тĕп тĕллевсем** – пенсисемпе социаллă йĕркеллĕ шайра тивĕçтересси тата финанс тĕлĕшĕнчи нумай вăхăтлăх тăнăçлăх. **Çакăн пек задача лартнă:** ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçине пенсионера пурăнма кирлĕ минимумăн 2,5 – 3 виçи таран çитермелле.

***2013 çулхи мартăн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш Енре ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи уйăхне 9325 тенкĕпе танлашнă. Ку вăл республикăра 2012 çулта палăртнă минимумран (4327 тенкĕ) 2,1 хут пысăкрах.***

***Ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕсене республикăра 293,6 пин çын е пĕтĕм пенсионерсен 84 проценчĕ илсе тăрать. Ватлăха пула паракан ĕç пенсине пурăнма кирлĕ минимумпа пăхнинчен 2,5 хут ытларах илсе тăракансем Чăваш Республикинче 72,4 пин пенсионер. Ку вăл асăннă пенсие илсе тăракансен 25 проценчĕ чухлĕ пулать.***

Стратегин тĕллевĕсенчен пĕри – пĕтĕм тĕнчери ĕç организацийĕ сĕннĕ шая тивĕçтересси. Нормативлă ĕç стажĕпе тата вăтам ĕç укçи шайĕпе шутласан ватлăха пула паракан пенси виçи ĕç укçин 40 проценчĕпе танлашмалла.

***2013 çулхи мартăн 1-мĕшĕ тĕлне ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн уйăхри вăтам виçи Чăваш Республикинче 2012 çулхи вăтам ĕç укçин 53,7 проценчĕпе (17,3 пин тенкĕ) танлашнă. Çĕнĕрен пенсисем шутласа панă чухне ку коэффициент чакма тивĕç. Çакă вăл республикăра ĕç укçин виçи ӳссе пынипе çыхăннă. Сăмахран, 2012 çулта пенси шутласа панисен вăл 46,8 процентпа танлашнă.***

## ПЕНСИ СИСТЕМИН ВИÇĔ ШАЙĔ

Стратегипе килĕшӳллĕн пенси системи виçĕ шайлă тытăмран тăмалла:

1-мĕш шай – ĕç пенсийĕ (патшалăх пенсийĕ). Страховани взносĕсенчен тата федераци бюджетĕнчен уйăракан бюджетсем хушшинчи трансфертсенчен пухăнать.

2-мĕш шай – корпоративлă пенси. Ăна ĕç паракан харпăр хăйĕн ĕç килĕшĕвĕпе е коллективлă килĕшӳре пăхнă пек, е отрасльти тариф килĕшĕвне тĕпе хурса палăртать.

3-мĕш шай – харпăр хăйĕн пенсийĕ, ăна ĕçлекенсем хăйсем йĕркелеççĕ.

***Хальхи вăхăтра çынсем хăйсен пулас пенсине йĕркелеме хутшăнмалли мелсенчен пĕри вăл – патшалăх пенсисене хушса финанслассин программи. Чăваш Республикинче Программăна хутшăнса хăйсен ирĕкĕпе хушма взноссем тӳлекенсен йышĕ çулсеренӳссе пырать. 2009 çулта кун пеккисем 7,6 пин çын, 2010 çулта 8,2 пин çын, 2011 çулта 8,3 пин çын, 2012 çулта 16,9 пин çын пулнă.***

***Чăваш Енре вара патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăнакансенчен виççĕмĕш пайĕ хăйсен пенсийĕн пухăнакан пайне патшалăх тытăмне кĕмен пенси фончĕсенче йĕркелет.***

## СТРАТЕГИЕ ПУРНĂÇА КĔРТЕССИН ТĔП ЕНĔСЕМ

Стратегие пурнăça кĕртессин тĕп енĕсем вĕсем – тарифпа бюджет политикине çĕнетсе улăштарасси, вăхăт çитмесĕрех пенсие тухассин тата пенсин пухăнакан пайне йĕркелессин системине реформăласси, корпоративлă пенсипе тивĕçтерессине аталантарасси, пенси системин валеçĕнӳ тытăмĕнче пенси правине йĕркелессине çĕнетсе улăштарасси.

## ТАРИФПА БЮДЖЕТ ПОЛИТИКИНЕ ÇĔНЕТСЕ УЛĂШТАРАССИ

Ĕç паракансем валли тарифсем ӳстерессине пăхса хуман. Хăш-пĕр отрасльсем валли çăмăллатнă тарифсем те сыхланса юлаççĕ. Малашне ĕç паракансем пурте взноссене пĕрлехи тарифпа тӳлесе тăрĕç. Вăл страховани виçипе шайлашса тăмалла. Тарифпа бюджет тĕлĕшĕнчи улшăнусен тĕп тытăмĕ – «пĕр тан правасем – пĕр тан тивĕçлĕх». Стратегире пенси системин виçĕ енĕн интересĕсене те шута илнĕ: пенсионерăнне те, страховани взносĕсем тӳлекенĕнне те, патшалăхăнне те. Патшалăх экономикăн хăш-пĕр секторĕсене пулăшу мелĕпе тивĕçтерни обязательнăй пенси страхованийĕн системине пырса тивмелле мар. Раççей Пенси фондне куçарнă страховани взносĕсем – харпăр хăйне каялла тавăрса паракан тӳлевсем.

**Стратегире харпăр хăй ĕçĕпе пурăнакансем тĕлĕшпе тариф политикине улăштарма сĕннĕ.** Кусем вĕсем уйрăм предпринимательсем, адвокатсем, нотариуссем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисем. Çакă вĕсем тӳлекен взноссен тата çынсем илекен пенсисен виçисем шайлашса тăманнипе çыхăннă.

Çак вăхăтчен харпăр хăй ĕçĕпе пурăнакансем хăйсен пулас пенсийĕ валли страховани взносĕсене страхланă çулталăк хакне кура тӳленĕ. Ăна ĕç укçин чи пĕчĕк пĕр виçинчен шутласа палăртнă. Çапла вара предпринимательсен пенси капиталĕ тара кĕрĕшсе ĕçлекенсен капиталĕнчен самай пĕчĕкрех пулса тухать. Ку вăл предпринимательсен пенси прависене хĕсĕрлени пулса тăрать. Çавăнпа пĕрлех харпăр хăй ĕçĕпе пурăнакансене пенси тӳлеме каякан укçа-тенкĕ виçи вĕсем куçаракан страховани взносĕсенчен темиçе хут пысăкрах. Предпринимательсене пенси тара кĕрĕшсе ĕçлекенсен страховани взносĕсем шучĕпе тӳлеме тивет.

Уйрăм предпринимательсем 2002 çултан тытăнса 2012 çулччен йĕркеллĕ тӳлесе тăнă страховани взносĕсем вăтамран 53 пин тенкĕ пулнă. Индексацие шута илсен пенси капиталĕн виçи 71,2 пин тенкĕпе танлашнă. Çак суммăна пенси тӳлесе тăмалли малтан палăртнă 228 уйăх çине пайласан ĕç пенсийĕн страхланă пайĕ 312 тенкĕ те 22 пуспа танлашать. Ку вăл тара кĕрĕшсе ĕçлекенсенчен 10 – 15 хут сахалрах. Палăртнă суммăна – 3495 тенкĕ (ку вăл пенсин база пайĕ, 2010 çултан тытăнса ăна палартнă виçе шучĕпе пенсин страхланă пайĕ шутне кĕртнĕ) хушнине шута илсен предпринимателĕн пенсийĕ 11 çул хушши ĕçленĕшĕн 3807 тенкĕпе çеç танлашмалла.

Çавна май 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса харпăр хăй ĕçĕпе пурăнакансем валли обязательнăй пенси страхованийĕн страховани взносĕсен калăпăшне чи пĕчĕк ĕç укçин икĕ виçинчен шутласа палăртаççĕ. Халĕ чи пĕчĕк ĕç укçин виçи 5205 тенкĕпе танлашать пулсан, предпринимательсем хăйсен пулас пенсийĕ валли çулталăкне **32479 тенкĕ те 20 пус** тӳлеççĕ. Уйăхне 2706 тенкĕ те 60 пус тӳлесси предпринимательсенчен ытларахăшĕшĕн кăткăсах мар.

***Тара кĕрĕшсе ĕçлекенсемшĕн, Чăваш Республикинче вăтам ĕç укçин виçи 17,3 пин тенкĕ пулнине шута илсен, обязательнăй пенси страхованийĕн взносĕсене çулталăкне 1,4 хут нумайрах куçарса параççĕ. 17,3 пин т. х 12 уйăх х 22 % тариф = 45,7 пин т.***

Страховани взносĕсене палăртнă виçепе тӳленĕ май предпринимательсен кайран пенси тӳлевне пенсионерăн пурăнма кирлĕ минимумĕнчен кая мар илсе тăма шанăç пур. Малашлăхра вара вĕсене суйласа илме правă парĕç: страховани взносĕсене е палăртнă виçепе тӳлесе тăрать, е тара кĕрĕшсе ĕçлекенсен тарифĕпе тӳлесе пырать те пысăкрах пенси илме пултарать.

***Чăваш Республикинче 2012 çул вĕçленнĕ тĕле уйрăм предпринимательсем 51,3 пин çын шутланнă е экономика тĕлĕшпе активлисен 7,6 проценчĕ чухлĕ. Çав вăхăтрах вĕсенчен 38 пин çын кăна Раççей Пенси фондне страховани взносĕ тӳлесе тăнă е хăйсен пулас пенсине йĕркеленĕ. Кунпа пĕрлех предпринимательсенчен 23 проценчĕ пĕр вăхăтрах тара кĕрĕшсе те ĕçлет.***

2012 çулхи декабрĕн 3-мĕшĕнче йышăннă 243-ФЗ № Федераллă саккунпа тара кĕрĕшсе ĕçлекенсемпе танах уйрăм предпринимательсемпе харпăр хăй ĕçĕпе пурăнакан ытти категорири çынсем валли те страховани взносĕсене палăртнă виçепе тӳлемен пулин те, **вĕсене страховани стажне кĕртмелли тапхăрсене палăртнă.** Кусем вĕсем предпринимательство ĕçне-хĕлне пурнăçламан чухнехи тапхăрсем. Анчах та ăна документсемпе çирĕплетес пулать. Ку тапхăрсем шутне çаксем кĕреççĕ:

– предприниматель призывпа çар службинче пулнă тапхăр;

– предприниматель кашни ачана çулталăк çурăна çитиччен пăхса пурăннă тапхăр, анчах та пĕтĕмĕшле виçĕ çултан ытла мар;

– предприниматель пĕрремĕш ушкăн инвалидне, инвалид ачана е 80 çул тултарнă çынна пăхса пурăннă тапхăр;

– çар çынни контрактпа çар службинче пулнă май ĕç тупма май çук пирки унăн мăшăрĕ ĕçлемесĕр пурăннă тапхăр, анчах та пĕтĕмĕшле пилĕк çултан ытла мар;

– мăшăрсенчен пĕрне Раççей Федерацийĕн дипломати представительствине е консул учреждениине, пĕтĕм тĕнче организацийĕсен Раççей Федерацийĕн яланхи представительствине янă пулсан, унпа пĕрле пурăннă тапхăр, анчах та пĕтĕмĕшле пилĕк çултан ытла мар.

**(Малалли пулать).**

**Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ**

# Районта заявленисем çук-ха

***Чăваш Енре пенсин пухăнакан пайĕн тарифне суйласа илессипе 100 ытла заявлени йышăннă. Пирĕн районта кун пеккисем çук-ха. 2013 çул хушшинче вара 1967 çулта тата ун хыççăн çуралнă граждансен страховани взносĕсен миçе процентне ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕ валли уйăрасси пирки йышăну тумалла.***

Страховани взносĕсен тарифĕсене çĕнĕрен шутласа палăртассине Раççей Федерацийĕнче пенси системине нумай вăхăтлăх аталантарассин стратегийĕпе пăхса хунă. Кунта икĕ вариант сĕннĕ: е хальхи пек пенсин пухăнакан пайĕ валли хывассине 6 процент хăвармалла, е тарифа 2 процента çити чакармалла та 4 процентне пенсин страхланă пайĕ валли куçармалла.

Пенсин пухăнакан пайне йĕркелеме право пур граждансенчен ытларахăшĕ «çăвара шыв сыпма» кăмăл тăвать – ертсе пыракан компанисемпе патшалăх тытăмне кĕмен пенси фончĕсене пĕр хут та суйласа илмен. Саккунпа килĕшӳллĕн кун пеккисен пухăнакан пенсийĕ патшалăхăн ертсе пыракан «Внешэкономбанк» компанийĕнче йĕркеленет. 2014 çулта вĕсем валли страховани взносĕсен тарифне палăртассипе улшăну пулать: взноссен 2 проценчĕ пенсин пухăнакан пайĕ валли, 4 проценчĕ ĕç пенсийĕн страхланă пайĕ валли кайма тытăнать. Енчен те 6 процент виçине пенсин пухăнакан пайĕ валли сыхласа хăварас тесен патшалăхăн ертсе пыракан урăх компанине, харпăр хăйĕн ертсе пыракан компанине е патшалăх тытăмне кĕмен пенси фондне суйласа илесси пирки заявлени çырса памалла.

Енчен те гражданин иртнĕ çулсенче пĕр хутчен те пулин урăх компание е пенси фондне суйласа илесси пирки заявлени çырса панă пулсан, унăн пенсин пухăнакан пайĕн тарифĕ 6 процентах сыхланса юлать. Пенсин пухăнакан пайĕн тарифне 2 процент виçипе йĕркелес тесен патшалăхăн кирек хăш ертсе пыракан компанийĕн инвестици портфельне суйласа илесси пирки заявлени памалла, 2 процент тесе паллă тумалла.

Пухăнакан пенсие инвестицилесси пирки ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕ валли хывакан страховани взносĕсен тарифне палăртса заявленисене 2013 çул вĕçлениччен РФ Пенси фончĕн кирек хăш территори органĕнче е алă пуснисем тĕрĕс пулнине шантарассипе Раççей Пенси фончĕпе килĕшӳ тунă организацисенче çырса пама пулать. Чăваш Республикинче кун пек килĕшӳсене Раççей Перекет банкĕ патшалăх тытăмне кĕмен «Большой НПФ», «КИТ Финанс», «Промагрофонд», «РГС» пенси фончĕсемпе тунă. Хăвăра интереслентерекен пур ыйтусемпе те Пенси фончĕн районти управленине пыма пултаратăр. Тел.: (83541) 63-0-41.

# Инвалид ачаллă çемьесем пулăшусăр юлмĕç

**Кăçалтан тытăнса инвалид ачасене тата 1-мĕш ушкăна кĕрекен ачаран инвалидсене, çавăн пекех вĕсен ашшĕ-амăшне е пăхса пурăнакансене паракан пенси виçисем ӳсрĕç.**

Ку улшăнусем Раççей Президенчĕн 2012 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнчи 1688 № Указĕпе çыхăннă.

Çапла вара 2013 çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнчи 51-ФЗ № Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса инвалид ачасене тата 1-мĕш ушкăнри ачаран инвалидсене паракан социаллă тӳлевсене 1,4 пин тенкĕ ӳстернĕ. Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне пенси виçи 8861 тенкĕ те 54 пуспа танлашать. Январьтенпе пенсие ӳстернине шутласа май уйăхĕнчен ăна пысăкрах виçепе тӳлесе тăма тытăнчĕç.

РФ Президенчĕн февралĕн 26-мĕшĕнчи 175 № Указĕпе килĕшӳллĕн инвалид ачана е 1-мĕш ушкăнри ачаран инвалида пăхса пурăнакан ĕçлемен ашшĕ-амăшне е опекунсене уйăхсерен 5500 тенкĕ тӳлесе тăраççĕ. Унччен вĕсене 1200 тенкĕ компенсаци тӳлевĕпе тивĕçтернĕ. Тӳлевĕн çĕнĕ виçи 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен вăйра.

Республикипе илес пулсан çак вăхăта социаллă пенсие 6,4 пин инвалид ача тата 1-мĕш ушкăнри ачаран инвалид илсе тăрать. Вĕсене пăхса пурăнакан ашшĕ-амăшĕпе опекунсем 2,2 пин çын та уйăхсерен укçа тӳлевне тивĕçет. Районта социаллă пенси илсе тăракан инвалид ачасемпе 1-мĕш ушкăнри ачаран инвалидсем 204-ăн, вĕсене пăхса пурăннăшăн уйăхсерен укçа тӳлевĕ илекенсем – 73-ĕн.

# Пенси виçине ӳстерме май парать

***Иртнĕ çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче вăя кĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн Чăваш Енре пурăнакан 20 пин çын пухăнакан пенсие илме кăмăл тунă. Муркаш районĕпе кун пеккисем 180 çын.***

Тĕпрен илсен кусем вĕсем 1953 çулта çуралнă е унтан çамрăкрах арçынсем тата 1957 çулта çуралнă е унтан çамрăкрах хĕрарăмсем. Вĕсемшĕн ĕç паракансем пенсин пухăнакан пайĕ валли обязательнăй страховани взносĕсем тӳленĕ пулнă. Çав шутах патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăнса хăйсен ирĕкĕпе взноссем хывса тăнă граждансене те кĕртмелле. Ватлăха пула ĕç пенсийĕ илсе тăма тытăннă май, çавăн пекех пенсие вăхăт çитмесĕрех пама тытăннă пулсан та, вĕсен пухăнакан пенсие илме право пур.

Заявленипе пыракансенчен ытларахăшне (99,9 процент) тӳлеве **пĕр хутăн** парса татмалла тунă. Мĕнпе çыхăннă-ха çакă? Енчен те пенсин пухăнакан пайĕ ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн пĕтĕмĕшле виçин 5 процентĕнчен иртмест пулсан, ăна пĕр хутăн параççĕ. Саккун вăя кĕнĕренпе республикипе 17 пин çын пухăнакан пенсие пĕр хутăн илнĕ, унăн вăтам виçи 6087 тенкĕпе танлашнă. Муркаш районĕнче укçа тӳлевĕсене пĕр хутăн 170 çын илнĕ, вĕсем вăтамран 7880 тенкĕпе танлашнă.

Хальхи вăхăтра республикипе 12 пенсионера пухăнакан пенсие **уйрăм тапхăр хушши** тӳлесе тăрĕç. Кусем вĕсем патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăнакансем. Кун пекки Муркаш районĕпе пĕр çын. Унăн вăтам виçи уйăхне 692 тенкĕпе танлашать. Тӳлев тапхăрне пенсионер хăй палăртать, анчах вăл 10 çултан кая пулма пултараймасть.

**Ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне** республикăра пурăнакан 13 çын уйăхсерен илсе тăрать. Унăн вăтам виçи уйăхне 365 тенкĕпе танлашать. Ку тӳлеве çын виличчене параççĕ. Пирĕн районта кун пекки пĕр çын.

Уйрăм тапхăр хушши парса тăракан пенси тӳлевĕпе ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕн виçисене çулleн августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса корректировка тăваççĕ. Ăна валли заявлени çырма кирлĕ мар. Çын пенсие тухнă е унччен пулнă корректировка хыççăн Пенси фончĕн счечĕ çине страховани взносĕсем куçнине шута илеççĕ.

# Наци паркĕпе паллашрăмăр

**Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк**




Çывăхри вăрмансемпе ĕшнесем ял çыннине хăйсен пуянлăхĕпе тата илемĕпе илĕртнине ачаран курса ӳсетпĕр. Тăван тавралăх пирки, ăна упрама кирли çинчен нумай калаçатпăр-тавлашатпăр, анчах эпир тавлашнипе кăна пирĕн тавралăх пуянланаймасть. Ĕçе çиччĕ виççе пăхакан çын хутшăнмасăр нимĕнле ырăлăх та куç умне пулманни кашни утăмрах палăрать. Çавăнпа та паянхи обществăра пире хупăрласа тăракан çут çанталăк ыйтăвĕ халăх умне çивĕчрех те çивĕчрех тухма пуçларĕ. Нумай ыйтăва кая хăвармасăр татса памалли никама та иккĕлентермест.

Иртнĕ кунсенче Муркашри вăтам шкулта вĕренекенсен пĕр ушкăнĕ В. Ивановăпа О. Петрова вĕрентекенсем ертсе пынипе чăваш вăрманĕн илемĕпе тата пуянлăхĕпе паллашас тĕллевпе Шăмăршă районĕнчи «Чăваш вăрманĕ» наци паркне кайса килчĕ. Çак çул çӳрев ачасен тавра курăмне самай анлăлатни пирки паян никамăн та иккĕленӳ çук. Вăрăм çул çӳрев ачасемшĕн те, вĕрентекенсемшĕн те питех те усăллă пулчĕ.

Чăваш вăрманĕнчи экскурси те, экскурсовод каласа-ăнлантарса пани те ачасенче çут çанталăка юратассине вăйлатрĕ çеç. Уйрăмах «Экологи сукмакĕпе», «Чăваш вăрманĕн вăрттăнлăхĕсем» çулпа иртни кашнинех çут çанталăка ытларах хӳтĕлемеллине, унăн пуянлăхне ӳстерессипе тăрăшмаллине яр уççăн ăнлантарчĕ. Ку енĕпе кая юлмасăр туса ирттермелли ĕçсем те куç умне пулчĕç.

«Чăваш вăрманĕ» наци паркне 1993 çулхи çĕртме уйăхĕн 20-мĕшĕнче уçнă. Унăн пĕтĕмĕшле лаптăкĕ – 25200 гектар. Наци паркĕ тĕрлĕ ӳсен-тăранпа палăрса тăрать. Нумайăшĕ Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн Хĕрлĕ кĕнекисенче пулни, çав ӳсен-тăрана хамăр куçпа курма май килни пирĕн çул çӳрев пĕлтерĕшне ӳстерчĕ çеç.

Парк чĕр чунсен тĕнчипе те пуян. Кунта пăшисем, упасем, хир сыснисем, кашкăрсем т. ыт. те пурăнаççĕ. Ирĕклĕ çĕрте сайра тĕл пулакан кайăксем те – «Чăваш вăрманĕн» пуянлăхĕ. Кунта пулса курсан чĕр чунсене кайăк-кĕшĕке упрасси пирки те çĕнĕлле ырă шухăшсем çуралаççĕ. Çавăнпа та асăннă наци паркĕнче пулни кашни чăваш çыннишĕн пĕлтерĕшлĕ утăм тесе калатпăр эпир паян.

Чăваш вăрманĕ çут çанталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те хăйне евĕр хитре те пуян. Ăна пулас ăрусем валли упраса хăварас ĕçре вăрманçăсене уйрăмах пушар хăрушлăхĕ пăшăрхантарать. «Вăрăран юлать те – пушартан юлмасть», – тенĕ мăн асаттесем. Çакна кулленхи пурнăç та тăтăш çирĕплетсе парать. Вăрмансене Çĕр планета ӳпкисем тесе пăхатпăр пулсан вĕсенче пушар тухни пурнăçа кĕскетниех пулать. Çакна асра тытса вăрмана тĕрлĕ уявсене уявлама е канма тухаканăн çут çанталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те тимлĕхе çӳллĕ шайра тытмалла. Асăрханулăх пирки юлташсене те, ытти çынсене те асăрхаттарсах тăмалла. Вăрмансене çӳп-çаппа тултарасси те юлашки вăхăтра вăй илни – питĕ синлĕ йĕрке. Çапла тăвакансен çут çанталăк саккунĕ умне тăмалла пулса тухасси пирки манас марччĕ.

Атте-асаттесем лартса ӳстернĕ вăрмансем пирĕн хыççăнхи ăрусем валли те таса та сывă упранса юлччăр. Çавăн чух çеç пирĕн вĕсем умĕнче пит хĕретмелле пулмĕ.

**О. ПЕТРОВА,**
**шкулти вĕрентекен.**

## Объявления


**Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» реализует: утеплитель «Технониколь» – 530 руб.; гипсокартон – 185 руб.; фанера влагостойкая 9 мм; профнастил оцинк. 2 м – 400 руб., профнастил крашеный 2 м – 480 руб.; сухие смеси, цемент М-400 – 170 руб., М-500 – 230 руб.; сайдинг; двери, поликарбонат. Тел.: 8-961-348-66-36, 8-903-322-59-69. 1-10.**

* * *

**Продаю деревянный дом с надворными постройками. Земля 38 сот. Деревня Нискасы. Тел: 8-903-345-95-79.**

* * *

**Продаю дойных коз белой и черной масти. Тел.: 8-965-681-31-32.**

* * *

**Тăвата хут пăрулана хура-шурă тĕслĕ сĕтлĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-906-135-40-29.**

* * *

**Требуются каменщики (можно не специалисты) в Москву для черновой кладки из шлако-блока (200х200х400), ПГС (200х400х600), цена 1 м$^3$ – 1300 руб. Оплата своевременная, 60000–70000 руб. в месяц. Тел.: 8-906-383-64-64. 1-2.**

* * *

**Май уйăхĕнче пĕрремĕш пăрулана хура-шурă ĕне тата çичĕ уйăхри хура-шурă тынашка сутатăп. Рыккакасси ялĕ. Тел.: 8-908-306-81-46. 1-2.**


***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Кадастровым инженером Николаевым Андреем Витальевичем, адрес: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 8(83541)63-4-39, № квалификационного аттестата кадастрового инженера 21-11-68 от 28.04.2011 г., в отношении земельного участка из категории «земли населенных пунктов», с кадастровым номером 21:17:091301:41, расположенного по адресу: Чувашская Республика - Чувашия, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Рыкакасы, ул. Нижняя, д. 1.

Выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границы и площади земельного участка, находящегося в собственности Пирусовой Евдокии Петровны. Заказчиком кадастровых работ является: Пирусова Евдокия Петровна. Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границы земельного участка состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Рыкакасы, ул. Нижняя, д. 1, 10.06.2013 г. в 10 часов 00 минут.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. Межевой организации ООО «Аршин».

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности принимаются с 10.06.2013 г. по 10.07.2013 г. по адресу: с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Рыкакасы, ул. Нижняя, д. 2.

При проведении согласования местоположения границ земельных участков при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.

***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:230701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Петров Вячеслав Петрович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Ятманкино, ул. Мокрая, д. 6.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:230701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

# «Тату пурнăç ĕçлемесĕр пулмасть»

**Пирĕн хушăрах вĕсем**

***Хăйсен пурнăçĕнче ĕçрен хăраман çак çынсем пирки каласа пама уйрăмах кăмăллă. Вĕсем хăйсен çемье пурнăçĕпе пирĕн обществăшăн хăйне евĕр илем пулса тăраççĕ. Вĕсемпе танлашасси паян çемье çавăракан кашни çамрăкăн тĕллевĕ пулмалла тесе шутлатăп эпĕ.***

***Пурăнан пурнăçра тĕрлĕ çынсемпе тĕл пулма, хутшăнма тивет. Вĕсем хушшинче орденçăсем, геройсем, депутатсем, тĕрлĕ шайри пуçлăхсем тата хăйсен ятне энциклопедире хăварнисем пур. Анчах вĕсен ырă чапĕ хыçĕнче ĕçе чунĕпе парăннă, пысăк чыс-хисепе тĕлленмен тата уншăн тăрăшман чăн-чăн ĕçченсем пинĕ-пинĕпе. Вĕсем кашни ялтах пурăнаççĕ. Пурнăçра ĕçе тĕп вырăна кăларнăскерсем çамрăк вăхăтра куллен колхоз ĕçне утнă, тӳрĕ кăмăлпа вăй хунă, шаннă ĕçе таса чунпа пурнăçланă. Кунпа пĕрлех ял çинче те ятлă пулнă вĕсем: кӳршĕсемпе тăвансене вăй çитнĕ чухлĕ пулăшнă, укçашăн мар ача-пăча çуратса ӳстернĕ, тĕп ĕçрен пăрăнмасăрах килти хушма хуçалăха çирĕп алăра тытса пынă. Çапла вара вĕсем паян кашни ялăн хăйне евĕр илемĕ пулса тăраççĕ. Ялсенчи çак ятлă çынсем ял илемне ӳстереççĕ, унăн ятне çĕклеççĕ, паянхи çамрăксемшĕн пурнăç тĕслĕхĕ пулса тăраççĕ.***



**НИКИФОРОВСЕМ**

Эсир паянхи икĕ сăн ӳкерчĕкре куракан ĕç ветеранĕсем – хăй вăхăтĕнче пĕр çулта тата пĕр кунта çемье çавăрнă ентешсем. Вĕсем 36 пине яхăн çынлă районăмăрăн пĕр пайĕ кăна пулсан та, çирĕп пай, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх. Çапла калани – малаллахи сăмахăн никĕсĕ. Кунта сывă пурнăç йĕрки те, ĕçри тăрăшулăх та, вăрăм пурнăç тилхепи те, тарăн тымарлă таса юрату та – йăлтах пĕр çыхăра.

Пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре куракан Таисия Егоровнăпа Валентин Никифорович Никифоровсен çемйи – Ятман ялĕнчи ятлă çемьесенчен пĕри.

Валентин мучи 1928 çулхи нарăс уйăхĕн 26-мĕшĕнче Ятман ялĕнче çуралнă. Утма пуçласанах çĕр ĕçĕпе туслашнă. Яла хутла вĕрентес юхăм çитсен тăван ялти 4 класлă шкулта вулама-çырма вĕреннĕ, 1939 çулта малашлăха пăхакан каччă Кашмашри 7 çул вĕренмелли шкулта пĕлӳ пухма пуçланă. Анчах ашшĕне Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине илсе кайсан Валентин шкулта вĕренме пăрахать, хăйĕн пурнăçне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарать. Тăрăшуллă каччăна салтака кайма çул çитиччен К. Иванов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра уй-хир бригадине ертсе пыма шанаççĕ. 1949 – 1952 çулсенче Валентин Совет çарĕнче службăра тăрать. Çартан таврăнсан та пиçсе çитнĕ арçынна бригадирах лартаççĕ.

25 çул вăй хурать вăл бригадирта. Ун хыççăн 10 çул – кладовщикра. Апла-и, капла-и, анчах рядовой ĕçчен ĕçĕнчен те пăрăнман вăл, кирлĕ чухне ĕç тиркеменскер хуçалăх ферминче вăй хунă.

1958 çулхи нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнче Валентин Вăрманкас Сурăм хĕрне Таиçе качча илет. Çак кунтан пуçласа 40 çул Таисия Егоровна та мăшăрĕпе уй-хир бригадинче вăй хурать. Упăшки бригадир тесе çăмăл ĕç шырани пулман унăн çак вăхăтра. Çавăнпа ун пирки ялта ырă ят кăна. Куллен хуçалăх ĕçне утнă. Валентинпа Таиç ачасем пур тесе ĕç пăрахса ларман. Апла пулин те икĕ ывăлне те пурнăç çулĕ çине тĕрĕс воспитани парса кăларнă. Паян вĕсен çемйи пысăк: 5 мăнук, 2 кĕçĕн мăнук. Пуринпе те килĕшӳ-çураçу пулни Никифоровсем пурнăçа усăллă ирттернине çирĕплетет.

**ФИЛИППОВСЕМ**

Пурнăç çине хуçалла пăхассипе пĕр ялта пурăнакан Филипповсем те Никифоровсенчен кая юлмаççĕ. Ĕçе юратни, тăвансемпе ял-йыша хисеплени, ачисене тĕрĕс воспитани пани вĕсен çемйи туслă пулни пирки калать. Юлташĕ мăшăрне Вăрманкасра тупнă пулсан, Виталий Сергеевич Елена Григорьевнăна кӳршĕллĕ Шупуç ялĕнчен çураçса килнĕ. Паян 82 çулхи Виталий мучи те 1951 – 1956 çулсенче Тинĕс-çар флотĕнче службăра тăнă хыççăн хăйĕн ĕç ĕмĕрне К. Иванов ячĕпе хисепленекен хуçалăхрах ирттернĕ. 1957 çулта механизаци училищинчен вĕренсе тухнăскер мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен хĕлĕн-çăвĕн ДТ-54 «хурçă утпа» хуçалăх территорийĕнчи çулсене уçнă, фермăна апат турттарнă, ака-суха тунă.

Хăйĕн ĕç пурнăçне выльăх-чĕрлĕх отраслне халалланă Елень кинемей те вăхăтра хуçалăхри техник-осеменатор пулса тăван ен экономикине аталантарма пысăк тӳпе хывнă. Вăл ĕçленĕ вăхăтра хуçалăхра 100 ĕне пуçне 100 – 112 пăру илме вăй-хăват çитернĕ. Çавăнпах тăрăшса вăй хунипе вăл çулленех районтан, республикăран Хисеп грамотисемпе дипломсене тивĕçнĕ. Ăста специалист ял çыннисен ĕнисене те пайтах пĕтĕлентернĕ, çынпа тĕл пулсан хăйне мăнна хурса сывлăх сунмасăр иртни пулман.



Пĕрлешӳллĕ хуçалăхри ĕçсем килте лартман пулин те, Никифоровсемпе Филипповсен килти хушма хуçалăхĕсенче те юхăнчăк тавраш пулман, пахчара çум ӳсмен. Пурçукшăнах вĕсем нихăçан та хăйсен çемйинче шăвшав кăларман. Çакăнта пытанман-и-ха вĕсен çемье авторитечĕ?

– Ĕçлемелле, умри ĕçе чуна парса пурнăçламалла, юратса тунă ĕç ĕмĕре тăсать, çамрăклăха упрать. Ĕçленипе пĕрлех эрех-сăрапан аякра тăни те пирĕн пурнăçăмăрта яшлăха тăснин тĕп вăрттăнлăхĕ пулчĕ-тăр. Эпир 3 ывăл çуратса ӳстертĕмĕр те паян 4 мăнук пирĕн пурнăça илем кӳрет, – пурнăç тути-масипе самаях кушăрханă пит çăмартисене кулă кăларса калаçать 75 çулпа пыракан Елень кинемей хăйĕн «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль пуррине палăртса.

**А. БЕЛОВ.**

# Кил тата хушма хуçалăх



## Повар пулмах çуралнă

**Тутлă апат-çимĕç тĕпеленче**



Нумай ачаллă ача амăшне Тамара Михайловăна **(сăн ÿкерчĕкре)** Оринин ял тăрăхĕнче пурăнакан кашни çын, килен-каян, шкулта вĕренекен аван пĕлет. Тутлă апат-çимĕç пĕçерессипе ăста вăл. Унăн пултарулăхĕпе чи малтанах «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн столовăйне кĕрсен паллашма майĕ пур.

Икĕ ывăлпа икĕ хĕр çуратса ÿстернĕ 5-мĕш разрядлă повар ачасем йышли çине çитсен нумай ача пулнишĕн тĕлĕнме кирлĕ мар тет. Тамара Геннадьевна сăмахĕнчен нумай ача вăл хĕрарăм телейĕ, мал туртăмлă çемье аталанăвĕн никĕсĕ пулни палăрать. Туслă çемьери икĕ мăнук – ырă малашлăх палли.

– Çамрăк ăрăвăн пуласлăхĕ – тутлă та паха апат-çимĕçре. Килте лартса ÿстернĕ, хушма хуçалăхри выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕкрен илнĕ паха продукци – çирĕп сывлăх никĕсĕ. Çакна ăнланса алă айĕнчи çимĕçренех тĕрлĕрен тутлă апат-çимĕç хатĕрлеме тăрăшатăп. Тутлипе пĕрлех унăн пахалăхĕ те чи çÿллĕ шайра пултăр тесе тимлесси – манăн ĕç вăрттăнлăхĕ, – сăпайлăн калаçать кăнтăр апачĕ вĕçленнине кура ĕçрен кăштах пушаннă повар.

Ĕçлекен çынсене вăхăтра тутлă апатпа тивĕçтересси вара нумай чухне пушă вăхăт хăвармасть те. Анчах пĕрлешÿллĕ хуçалăхра апат хатĕрлекен поварăн тăван килте те тăтăшах сĕтел хатĕрлеме тивет. Кунта вара унăн фантазийĕ татах та пуянрах. Эпир ыйтнипе Тамара Геннадьевна хăш-пĕр апат-çимĕçе хатĕрлессин технологийĕпе паллаштарчĕ. Ÿркенмесен эсир те хатĕрлесе пăхăр.

**ВĔЛТĔРЕН САЛАЧĔ.** 400 грамм çамрăк вĕлтĕрен, 100 грамм симĕс сухан, 1–2 туна петрушка, 0,5 стакан тасатнă грек мăйăрĕ, тутине кура тăвар.

Çуса тасатнă вĕлтĕрен çулçисене темиçе минутлăха вĕри шывра тытмалла та ала çине хурса шыва юхма памалла. Ун хыççăн тураса салат чашăкне хумалла. Ăна вĕтĕ туранă суханпа, тăварпа хутăштармалла. Грек мăйăрне вĕлтĕрен шывĕпе ислетмелле те унта кăштах уксус ямалла. Çак мăйăра салат чашăкĕнчи симĕс хутăшпа пăтратмалла. Вĕлтĕрен салачĕ хатĕр.

**ПАН УЛМИПЕ ÇАРĂК САЛАЧĔ.** 400 грамм çарăк, 200 грамм пан улми, 200 грамм хăйма, 100 грамм салат, тутине кура тăвар.

Çарăка терка витĕр кăлармалла. Пан улмине вĕтĕ турамсем çине пайламалла. Вĕсене пĕрле илсе хăймапа, тăварпа хутăштармалла. Хатĕр хутăша салат чашăкне е десерт турилккине хурса салатăн симĕс çулçисемпе илемлетмелле. Вăл сĕтел çине лартма питех те килĕшÿллĕ.

**ОКРОШКА.** Çу кунĕсенчи çак усă апата хатĕрлемелли рецепт чылай. Ăна хатĕрлеме тăрсан кашни кил хуçи хĕрарăмĕ хăйĕн вăрттăнлăхĕпе усă курать. Вĕсем вара чылай çемьере ăруран ăрăва куçса пыраççĕ. Окрошка сивĕ апат шутланать. Ăна сĕтел çине 7 – 14 градус ăшăпа параççĕ. Сезонри çак апата хатĕрленĕ чух ăстасем квасpa, пахча çимĕçрен вĕретнĕ шывпа, кефирпа, тăпăрчă шывĕпе усă кураççĕ. Çавăн пекех хурăн шывĕпе усă курнă тĕслĕхсем те пур. Окрошкăна кăлпассипе, ашпа е пахча çимĕçпе çеç хатĕрлеççĕ. Асăннă сивĕ апата хатĕрленĕ чух ашпа усă куратăр пулсан малтан ăна пĕçермелле, сивĕтмелле. Хыççăн ăна вĕттĕн турамалла. Окрошкăна пахча çимĕçпе çеç хатĕрленĕ чух рецептра аш çуккисĕр пуçне ĕç йĕрки улшăнмасть.

**Кирлĕ**

Пирĕн паянхи сивĕ апата эпир кăлпассипе тата тăпăрчă шывĕпе усă курса хатĕрлетпĕр. 4 литр окрошка хатĕрлеме çаксем кирлĕ: пĕçернĕ 4 – 5 çĕр улми, 500 грамм кăлпасси е аш-какай (чăх-чĕпĕн, сыснан, ĕне выльăхăн), 2 – 3 чĕрĕ хăяр, 5 çăмарта, хăвăр кăмăлăрпа редис, петрушка е укроп, симĕс сухан, 2 литр тăпăрчă шывĕ, 400 грамм хăйма.

**Ĕç йĕрки**

Кăлпассине тăваткал е тÿрем пайсем çине касса туратпăр. Пĕçерсе сивĕтнĕ çăмартана та çапла вaклатпăр. Çăмарта саррине тĕпретсе тăварпа, сахăрпа, горчицăпа тата хăймапа хутăштаратпăр. Хыççăн ăна симĕс суханпа пĕрлештеретпĕр. Çăмарта саррине хăйне те турасан сĕтел çине лартмалли апат хитререх çеç пулать.

Пĕçернĕ çĕр улмине тата хăяра тасататпăр та кубиксем туса туратпăр.

Симĕс çимĕçсене те вĕтететпĕр.

Хатĕрленĕ çимĕçсене кастрюле вырнаçтаратпăр та унта тăпăрчă шывĕ хушатпăр. Кунта хăвăр кăмăлăрпа çăкăр квасĕпе, кефирпа, хурăн шывĕпе усă курма та пултаратăр.

Хатĕрленĕ хăймана горчицăн пысăк мар пайĕпе хутăштарăр. Хатĕр хутăша окрошкăна ярăр та хăвăра кирлĕ пек тăварпа сахăр хушса холодильника сивĕнме лартăр.

Окрошка 7 – 14 градуса çитсен çимелле пулса çитет. Апачĕ тутлă пултăр!

**А. БЕЛОВ**
**çырса илнĕ.**

**Ыйту – хурав**

## Чылай вăхăт упранать

***Какайĕ паха пулнине шута хурса килти хушма хуçалăхра кăçал чăхсем нумай усратăп. Пĕлес килет, вĕсен çăмартине мĕн чухлĕ упрама юрать?***

**Надежда ЕФИМОВА.**

Вулакана хумхантаракан ыйту нумайăшне паллă. Чылай вăхăт упрама çĕмĕрĕлмен, таса хупăллă çăмартасене уйăрса илмелле. Вĕсене йăваран илнĕ хыççăн тÿрех сивĕтсен аван. Типĕ, сулхăн (10 градуса çити) çĕрте чăх çăмарти 2–3 эрне чиперех упранать. Холодильникра пулсан вăл 3–4 уйăх та пăсăлмасть.

Тин çеç тунă çăмартана 120 градуса çити вĕрилентернĕ тип çура 5 çеккунтлăха тытсан ăна 6–8 уйăх таран та упрама пулать.

Çăмартана çавăн пекех салăпа е вазелинпа сĕрни те продукцие чылай вăхăт упрама май парать.

**А. ФЕДОРОВА,**
**выльăх тухтăрĕ.**

**Пахчаçă сĕнет**

## Çапла акатпăр, шăваратпăр

Пахчари ĕçсене мăшăрăмпа «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçатри «Кил тата хушма хуçалăх» кăларăмра пичетленекен уйăх календарĕпе килĕшÿллĕн пурнăçласа пыратпăр. Вăхăтпа килĕшÿллĕн пахча çимĕçпе тымар çимĕçе акса-лартса пĕтеретпĕр те ĕнтĕ. Хамăр ĕçе тăтăшах сăнаса тăнăран акнă-лартнă вăрăсем шăтманни те тĕл пулать. Кун пек чух вĕсене тепĕр хут акма тивет. Çак ĕçре, каярах пулсан та, хамăн сĕнÿсемпе паллаштарас тетĕп.

Хамăр урамра пурăнакан пĕр хусах хăяр вăрри ыйтрĕ те эпĕ ун патне вăрăпа пĕрле хамăр килте лартнă хыççăн юлнă калчасене те илсе кайрăм. Ку çитмерĕ-ха, калчасене марльăпа чĕркенĕрен вĕсене йăран çине лартма пĕр-пĕринчен уйăрма хăтланса юлташăм хуçса ан пĕтертĕр тесе хамах лартса патăм. Эпĕ лартатăп – вăл шăварать. Калчана икĕ симĕс çулçăна çиеле хăварса лартатăп та тымар патĕнчи тăпрана алă лаппипе хыттăн пусăрăнтаратăп.

Пĕр хушă çапла ĕçленĕ хыççăн пахча çимĕç вăррисене юлташăма актартăм. Вăл касăсене акать, эпĕ вĕсене тăпрапа витетĕп, пусăрăнтаратăп.

Вăл эпĕ ĕçленине сăнаса пыракансер:

– Çавăн пек пусăрăнтармалла-и вара? – тесе ыйтрĕ.

Хуравĕ манăн хатĕр. Ăнлантаратăп:

– Пахча çимĕçе тулăх туса илес тесен ăна аксалартса туса илессин хăйĕн технологийĕ пур. Пахчаçăн ăна çирĕп пăхăнмалла. Хăяр, кавăн, кабачок тата ытти шултра пулакан пахча çимĕç культурисен вăрлăхне аксан е калчине лартсан çав вырăнсене пусăрăнтармалла. Вĕтĕ вăрăллă пахча çимĕçе вара – кишĕре, хĕрлĕ кăшмана, йÿçĕ кăшмана, çарăка, редиса, салата, петрушкăна т. ыт. те – ретсем тăрăх акнă чух çав рете пĕтĕмпех пусăрăнтарма тăрăшмалла. Çапла туни вăрлăх патĕнче нÿрĕк çителĕклĕ пулма кирлĕ.

Çакăнта пĕр 10 çул каялла пулса иртнĕ пĕр истори аса килчĕ. Ун чухне мăшăр шкулта ĕçлет-ха. Пĕр учительница кишĕр шăтмарĕ тесе пăшăрханса калаçать тет. Мăшăрăм ăна алă лаппипе лайăх пусăрăнтармарăн пулĕ тесен хайхискер ĕçĕн çак мелне пĕлменни куç умне тухать.

– Эсĕ пахчаçă арăмĕ пулнăран пĕлетĕн ĕнтĕ, – тесе хурав пачĕ тет вĕрентекен.

Выльăх кăшманне çĕр улми ани çине акатпăр. Ретсем хушши 40 – 50 сантиметр. Нумай акнă пирки кунта алăпа пусăрăнтарса пĕтереймĕн. Эпĕ вара майне тупрăм: урапа пусăрăнтаратăп.

Ĕç опычĕ çакна кăтартать. Пусăрăнтарнă анасем çинче пахча çимĕç хăвăртрах шăтать, тăпра та час типмест.

Хăяр тата купăста калчисене шăварнă чухне калча кайса ÿкесрен асăрханса ĕçлемелле. Технологие пăхăнса лартнă калчасемпе вăхăтра акнă вăрлăхсем хăвăрт ÿсĕме каяççĕ. Ял çыннин вĕсенчен паха çимĕç кĕтмелли вăхăт та кĕскелет.

**Н. ПЕТРОВ,**
**пахчаçă.**

Нискасси ялĕ.

**Дача словарĕ**

**Гербицид – çум курăкĕсене пĕтерекен хими им-çамĕ.**
**Ренклод – çаврака çимĕçлĕ слива сорчĕ.**
**Сидерат – ешĕл удобрени вырăнне усă куракан ÿсентăран (ыраш, горчица акаççĕ).**

**Астасем сĕнеççĕ**

## Сыр хатĕрлетĕп

Килти хушма хуçалăх тытакан алă айĕнчи выльăх-чĕрлĕх продукцийĕнченех тĕрлĕрен апат-çимĕç хатĕрлеме пĕлет. Çак çулпа пырса эпĕ те пĕрремĕш çул мар хамăн хуçалăхра сыр тăватăп. Ачасем те юратаççĕ, хăна-вĕрле пухсан та паха çимĕç пурин кăмăлне те каять. Паян хаçат вулакансене хамăн ĕç вăрттăнлăхĕпе паллаштарам-ха.

Малтанах 3 литр сĕт çине 2,5 кг тăпăрчă ямалла. Газ плити çинче вĕретме кĕртмелле. Пĕрешкел хутăш пулса çитсен ăна тăпăрчă хутаççипе сăрхăнтармалла. Хатĕр тăпăрчăна 2 çăмарта, кирлĕ чухлĕ тăвар, пĕр апат кашăкĕ услам çу ямалла. Хăвăрт пăтратмалла та чашăка пушатса полиэтилен хутпа тата ăшă тытма çиелтен утиялпа витмелле. 12 сехет ларсан холодильника вырнаçтармалла та тепĕр 12 сехетрен çиме юрать.

**В. ВАСИЛЬЕВА.**

Мăн Сĕнтĕр сали.

## Яла сăн кĕртер-и?

**Тирпей-илем**

Шатракасси ял урамĕпе пынă чух пÿрт умĕнчи картишĕнче пĕр кинемей чечексемпе аппаланнине асăрхарăм. Хĕрлĕ, сарă, кĕрен чечексем хушшинче кинемей те чечек пекех курăнса кайрĕ. Ку вăл ялта пурăнакан Мария Косарева пулчĕ.

Мария Ильинична 1931 çулта Куславкка районĕнчи Карач ялĕнче çуралса ÿснĕ. Шатракасси ялĕнче пурăнакан çынпа çемье çавăрнă. 1949 çултанпа Шатракасси ялĕнчи артельте ĕçленĕ. Унта вăл вăхăтра тĕрлĕ сĕтел-пукан, ытти хатĕрсем ăсталанă.

М. Косарева ал ĕçне те ăста. Тĕрлĕ конкурссене те хутшăннă. Шупашкар хулинче те Мария Ильиничнăн ĕçĕсене курса киленнĕ. Районти конкурссене хутшăнса та малти вырăнсене тивĕçме пултарнă.

Хастар кинемей 80 урлă каçнă ĕнтĕ. Çапах та килти хуçалăхра выльăхсемпе те аппаланать. Пÿртĕнче те унăн чечексем пайтах,пÿрт ум картишĕнче те чечексем ÿстерет.



Чечексене кура ял урамĕ те илемлĕрех курăнать. Мария Ильинична тĕслĕхĕпе ыттисен те çак ĕçе кÿлĕнмелле мар-ши? Хамăр урам, кил илемĕ хамăршăнах вĕт-ха?

**И. ТАЙМАСКИНА,**
**Шатракассинчи ял библиотекин ертÿçи.**

**Сăн ÿкерчĕкре: епле илемлĕ чечексен тĕнчи!**

# Телепрограмма

с 10 по 16 июня 2013 года

## ПОНЕДЕЛЬНИК, 10.06

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.15 Т/с «ПРОСПЕКТ БРАЗИЛИИ» 16+
17.00 «Я подаю на развод» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЗАЩИТА СВИДЕТЕЛЕЙ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+
1.25, 3.05 Х/ф «КОМАНДА 49: ОГНЕННАЯ ЛЕСТНИЦА» 16+
3.35 «Цой - «Кино»

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Дело Х. Следствие продолжается» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00, 17.30 Т/с «ПОЦЕЛУЙТЕ НЕВЕСТУ!»
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Х/ф «ТОЧКА ВЗРЫВА» 12+
0.30 «Девчата» 16+
1.10 Вести +
1.35 Т/ф «40 000 ФУТОВ» 16+
3.30 Т/с «ЧАК-4» 16+

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

**На канале «Россия 2»**

7.20-7.50 Вести-Спорт-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю 16+
10.50 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Х/ф «БЕРЕГОВАЯ ОХРАНА» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «КРАПЛЕНЫЙ» 16+
0.35 Т/с «СТЕРВЫ» 18+
1.30 Д/ф «Точка невозврата» 16+
2.30 Дикий мир 0+
3.00 Т/с «АЭРОПОРТ» 16+
5.00 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+

## ВТОРНИК, 11.06

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.15 Т/с «ПРОСПЕКТ БРАЗИЛИИ» 16+
16.10 «Я подаю на развод» 16+
17.00 «Поле чудес»
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЗАЩИТА СВИДЕТЕЛЕЙ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 Х/ф «ПО ВЕРСИИ БАРНИ» 16+
2.35, 3.05 Х/ф «ГДЕ УГОДНО, ТОЛЬКО НЕ ЗДЕСЬ» 16+
4.50 «За кулисами «Большой разницы»

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Дело Х. Следствие продолжается» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00, 17.30 Т/с «ПОЦЕЛУЙТЕ НЕВЕСТУ!»
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 «Измайловский парк» Большой юмористический концерт 16+
22.50 Х/ф «НА ВСЮ ЖИЗНЬ» 12+
0.40 Х/ф «4 ТАКСИСТА И СОБАКА» 12+
3.00 Т/с «ЧАК-4» 16+
3.55 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость (на чувашском языке)
9.25-9.45 Дорога к храму
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Чистосердечное признание 16+
10.50 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Х/ф «БЕРЕГОВАЯ ОХРАНА» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «КРАПЛЕНЫЙ» 16+
0.35 Т/с «СТЕРВЫ» 18+
1.30 Главная дорога 16+
2.00 «Чудо техники» 12+
2.35 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «АЭРОПОРТ» 16+
5.05 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+

## СРЕДА, 12.06

### ПЕРВЫЙ

6.00, 10.00, 12.00, 15.00 Новости
6.10 Х/ф «МЫ, ДВОЕ МУЖЧИН» 12+
7.50 Х/ф «КУБАНСКИЕ КАЗАКИ»
10.10 Х/ф «ВЕСНА НА ЗАРЕЧНОЙ УЛИЦЕ»
12.15 Х/ф «ДАЧНАЯ ПОЕЗДКА СЕРЖАНТА ЦЫБУЛИ»
13.40, 15.15 Х/ф «ОНИ СРАЖАЛИСЬ ЗА РОДИНУ»
17.00 Х/ф «ОРДА» 16+
19.25 «ДОстояние РЕспублики» Лучшее
21.00 «Время»
21.30 Легендарный фильм в цвете. «Офицеры»
23.15 Юбилейный концерт Николая Расторгуева и группы «Любэ»
1.05 Х/ф «ИСЧЕЗНОВЕНИЕ» 16+
3.10 Х/ф «ПОЖАР» 16+

### РТР

4.50 Х/ф «ВЕРНЫЕ ДРУЗЬЯ»
6.50 Х/ф «ЛЮБОВЬ ЗЕМНАЯ»
8.45 Х/ф «СУДЬБА»
12.00 Москва. Кремль. Церемония вручения Государственных премий Российской Федерации
13.00, 14.20 Х/ф «ЯЩИК ПАНДОРЫ» 12+
14.00, 20.00 Вести
17.00 «Кривое зеркало. Театр Евгения Петросяна» 16+
18.55, 20.20 Х/ф «МАРШ-БРОСОК: ОСОБЫЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВА» 12+
23.00 «Россия молодая» Праздничный концерт. Трансляция с Красной площади
0.30 Х/ф «4 ТАКСИСТА И СОБАКА-2» 12+
3.25 Х/ф «УСТРИЦЫ ИЗ ЛОЗАННЫ» 16+

### НТВ

6.05, 5.00 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
7.00, 8.15, 10.20, 13.25, 19.20 Х/ф «КОДЕКС ЧЕСТИ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
0.05 Х/ф «СИБИРЯК» 16+
2.00 Квартирный вопрос 0+
3.05 Т/с «АЭРОПОРТ» 16+

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

**Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.**

**Заказчиками проекта межевания являются: Бычкова Нина Викторовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, с. Тораево, ул. Кирова, д. 9. Степанов Валерий Георгиевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, с. Тораево, ул. Комбинатская, д. 12. Степанова Светлана Леонидовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, с. Тораево, ул. Комбинатская, д. 12.**

**Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru**

**Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение.**

**С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.**

**Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.**

## ЧЕТВЕРГ, 13.06

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.15 Т/с «ПРОСПЕКТ БРАЗИЛИИ» 16+
16.10 «Я подаю на развод» 16+
17.00 «Свадебный переполох» 12+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Х/ф «ФОРСАЖ 5» 16+
0.00 Международный музыкальный фестиваль «Белые ночи Санкт-Петербурга» День 1-й
1.55, 3.05 Х/ф «КУЗИНА БЕТТИ» 16+
4.00 «Тамара Гвердцители. «Я трижды начинала жизнь с нуля» 12+

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Дело Х. Следствие продолжается» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00, 17.30 Т/с «ПОЦЕЛУЙТЕ НЕВЕСТУ!»
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «АПОФЕГЕЙ» 12+
22.50 «Поединок» 12+
0.25 «Валентина Терешкова. Чайка и Ястреб»
1.25 Вести +
1.50 «Честный детектив» 16+
2.25 Т/ф «ХУЛИГАНЫ-2» 16+
4.15 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Активная молодежь
9.15-9.45 Секреты здоровья и красоты
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Медицинские тайны» 16+
10.50 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Х/ф «БЕРЕГОВАЯ ОХРАНА» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «КРАПЛЕНЫЙ» 16+
1.35 «Дачный ответ» 0+
2.35 Дикий мир 0+
3.00 Т/с «АЭРОПОРТ» 16+
5.00 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+

## ПЯТНИЦА, 14.06

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.15 Т/с «ПРОСПЕКТ БРАЗИЛИИ» 16+
16.10 «Я подаю на развод» 16+
17.00 «Жди меня»
18.50 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес»
21.00 «Время»
21.30 Х/ф «ЖИВАЯ СТАЛЬ» 12+
0.00 Международный музыкальный фестиваль «Белые ночи Санкт-Петербурга» День 2-й
1.55 Х/ф «ПЛОХИЕ ДЕВЧОНКИ» 16+
3.45 Х/ф «РУБИН ГУД» 12+

### РТР

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.05 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Дело Х. Следствие продолжается» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00, 17.30 Т/с «ПОЦЕЛУЙТЕ НЕВЕСТУ!»
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «АПОФЕГЕЙ» 12+
22.50 Х/ф «ПРЕВРАТНОСТИ СУДЬБЫ» 12+
0.50 Х/ф «КОНТРАБАНДИСТ» 16+
2.30 Горячая десятка 12+
3.35 Т/ф «ДОЛГОЕ ПРИВЕТСТВИЕ И БЫСТРОЕ ПРОЩАНИЕ» 16+

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.05-9.45 Творческий вечер композитора Анатолия Никитина. 2 часть (на чувашском языке)
11.30-11.50 Вести-ПФО
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Спасатели 16+
10.50 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Х/ф «БЕРЕГОВАЯ ОХРАНА» 16+
23.20 Т/с «КРАПЛЕНЫЙ» 16+
1.20 Дикий мир 0+
2.30 Т/с «АЭРОПОРТ» 16+
4.30 «Кремлевские дети» 16+

## СУББОТА, 15.06

### ПЕРВЫЙ

5.45, 6.10 Х/ф «НЕПОДСУДЕН»
6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
7.35 «Играй, гармонь любимая!»
8.20 М/ф «Джейк и пираты Нетландии»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Коммунальный рай»
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 «Абракадабра» 16+
15.20 «Форт Боярд» 16+
16.55 «Отпуск с риском для жизни»
18.15 «Угадай мелодию»
18.55 «Кто хочет стать миллионером?»
20.00 «Куб» 12+
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Что? Где? Когда?»
0.00 Международный музыкальный фестиваль «Белые ночи Санкт-Петербурга». Финал
1.55 Х/ф «КОММАНДО» 16+
3.35 Х/ф «ХОЛОДНЫЕ СЕРДЦА» 16+

### РТР

5.30 Х/ф «ЗДРАВСТВУЙТЕ, Я ВАША ТЕТЯ!»
7.30 «Сельское утро»
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.20 «Минутное дело»
9.25 Субботник
10.05 «Погоня»
11.20 Вести. Дежурная часть
11.55 «Честный детектив» 16+
12.25, 14.30 Х/ф «НАЙДЕНЫШ-2» 12+
16.50 Субботний вечер
18.55 Шоу «Десять миллионов»
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «СЧАСТЬЕ ЕСТЬ» 12+
0.35 Х/ф «СЛЕПОЙ ГОРИЗОНТ» 16+
2.40 Х/ф «КОСМИЧЕСКИЙ ДЖЕМ» 16+
4.25 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

8.10-8.20 Вести-Чăваш ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
10.50-11.00 Солнечный зайчик (на чувашском языке)
14.20-14.30 Вести-Чувашия

### НТВ

5.30 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 «Государственная жилищная лотерея» 0+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок с Оскаром Кучерой 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.20, 19.20 Т/с «УГРО-4» 16+
21.15 «Русские сенсации» 16+
22.15 Ты не поверишь! 16+
23.15 «Луч Света» 16+
23.45 «Реакция Вассермана» 16+
0.20 «Школа злословия» Наталья Громова 16+
1.05 «Казнокрады» 16+
2.05 «ГРУ: тайны военной разведки» 16+
3.00 Т/с «АЭРОПОРТ» 16+
5.00 «Кремлевские дети» 16+

## ВОСКРЕСЕНЬЕ, 16.06

### ПЕРВЫЙ

5.45, 6.10 Х/ф «ГОЛУБАЯ СТРЕЛА»
6.00, 10.00, 12.00 Новости
7.40 «Армейский магазин» 16+
8.15 М/ф «Аладдин»
8.40 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 «Среда обитания» 12+
13.10 Х/ф «ВСАДНИК БЕЗ ГОЛОВЫ»
15.05 Х/ф «ДЕТИ ДОН КИХОТА»
16.30 «Призвание» Премия лучшим врачам России
18.20 Музыкальный фестиваль «Голосящий КиВиН»
21.00 Воскресное «Время»
22.00 «Вышка» 16+
0.00 Х/ф «СОБЛАЗНИТЕЛЬ» 16+
2.15 Х/ф «ПЕРЕВАЛ МИЛЛЕРА» 16+
4.25 «Контрольная закупка»

### РТР

5.35 Х/ф «ОДИНОЧНОЕ ПЛАВАНИЕ»
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама»
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 Х/ф «КРЫЛЬЯ АНГЕЛА» 12+
13.20, 14.30 «Смеяться разрешается»
16.00 Т/с «СВАТЫ-5» 12+
20.00 Вести недели
21.30 Х/ф «НЕВЕСТА МОЕГО ЖЕНИХА» 12+
23.30 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
1.20 Х/ф «СПРОСИТЕ СИНДИ» 16+
3.15 Х/ф «МАШИНА ВРЕМЕНИ» 16+

### ЧУВАШИЯ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

**На канале «Россия 2»**

8.35-9.00 Вести-Спорт-Чувашия

### НТВ

6.00 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Русское лото» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
10.55 «Чудо техники» с Сергеем Малоземовым 12+
11.25 «Поедем, поедим!» 0+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.25 Следствие вели... 16+
14.20 «Очная ставка» 16+
15.20 Своя игра 0+
16.15 Т/с «МОСКВА. ЦЕНТРАЛЬНЫЙ ОКРУГ» 16+
18.20 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа»
20.00 Чистосердечное признание 16+
20.35 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым 16+
21.30 «Железные леди» 16+
22.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
1.15 Дикий мир 0+
2.10 «ГРУ: тайны военной разведки» 16+
3.00 Т/с «АЭРОПОРТ» 16+
5.00 «Кремлевские дети» 16+

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельных участков

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1288, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5972 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1290, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:629, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, для огородничества, площадью 460 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070602:55, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:1070603 для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6175 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:170203:121, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:170203 для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:121301:2021, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

## Объявления

Продаем окна деревянные любого вида и на заказ, двери деревянные (массив). Тел.: 8-906-388-66-04, 8-905-341-02-86. 11-15.

* * *

Продаю: гравмассу; щебень гранитный, доломитовый, известковый; керамзит; бетон; торф; песок речной, карьерный. С доставкой. Недорого. Тел.: 8-927-668-70-15. 11-24.

* * *

ПРОДАЮ: комбайн СК-5 – Нива; пресс-подборщик ПРФ-180. Тел.: 8-937-958-51-14. 3-5.

* * *

Срочно требуется бригада строителей в Московскую область для строительства каркасных и брусовых домов.
Тел.: 8-906-130-97-90, 8-937-375-31-51. 3-5.

* * *

Продаю ОПГС (гравмасса), песок. Тел.: 8-905-199-69-33. 3-8.

* * *

Пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 3-10.

* * *

Продаю песок, гравмассу, бой кирпича с доставкой.
Тел.: 8-905-347-99-15. 3-10.

* * *

Проекты зданий и инд. домов, электро-, водо- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс», с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03.

БЕТОН, РАСТВОР всех марок. Доставка. Дешево.
Тел.: 8-927-668-87-78. 15-43.

ТЦ «ЛОТОС» реализует: цемент – 180 р., профнастил окраш. 213 руб. кв. м., оцинкован. 171 руб. кв. м., трубы б/у для столбов 127 р. пог. м. , профиль 20х20, 40х20, 40х40, поликарбонат тепличный – 1500 р., утеплители. Доставка. Заявка по тел.: 8-917-665-27-26, 48-33-46. 3-10.

ПЕСОК речной, ОПГС (гравмасса), ЩЕБЕНЬ. Доставка.
Тел.: 8-927-668-84-40. 15-43.

МОСКВА – ВАХТА!!!
В Москву и Московскую обл. требуются
**ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО.
Вахта. Выезд группами до предприятия.
Гарантии. З/п 27 000 – 35 000 руб.
Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30. 1-4.

ООО «ОБРЯД» оказывает следующие виды ритуальных услуг:
изготовление и установка надгробных памятников, также для умерших (после 12.06.1990 г.) участников ВОВ.
Реализует кресты, гробы, ограды, столы, скамейки, венки и пр.
Изготовление портретов на гранитной плите.
г. Чебоксары, переулок Ягодный, д. 4 «А», тел.: 8(8352)35-10-83, 8-903-389-99-29.
с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2, тел.: 8-903-063-41-42. 3-3.

Срочно! Вахта в Москву и МО:
– фасовщицы-упаковщицы
– грузчики-комплектовщики
Жилье, питание, транспорт – бесплатно.
З/п 27 000-35 000 10-10.
Тел: 8(8352)36-03-32, 36-42-92.

## Пĕлтерӳсем. Объявления




Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.:8-905-340-07-78. 6-10.




с. Моргауши, ул. Гагарина, 2,
здание бани, 2 этаж, тел. 8(8352)76 58 95
с. Б. Сундырь, ул. Ленина, 23а, ТД „Космос“, тел. 8(8352)76-58-97
г. Чебоксары, ул. Хузангая, 14, офис 403, тел. 8(8352)766 788

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-10.







Магазин «СТРОЙМАТЕРИАЛЫ»: цемент М-400 40 кг от 175 руб.; трубы профильные и квадратные от 35 руб.; уголок металлический от 25 руб.; арматура А 3 от 20 руб.; сетка сварная, сетка кладочная, сетка-«рабица»; гипсокартон от 190 руб.; ДВП, фанера; панели МДФ, ПФХ от 100 руб.; утеплители технониколь; вагонка, хвоя, липа; плинтус, углы хвоя; клей плиточный, штукатурка, шпатлевка; двери межкомнатные простые и с покрытием ПВХ; профнастил оцинкованный и крашеный п/м от 210 руб.; Покупателям свыше 10000 руб. скидка 5%. Тел.: 62-5-86, 8-905-197-25-23.

Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FuLL HD. Триколор – 7300 руб.+подарок на 500 руб. Телекарта – 3500 руб. Тел.: 8-906-385-29-30. 4-10.




Цифровое спутниковое телевидение
ТРИКОЛОР – 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА – 3000 руб.
Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 14-15.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ обрезные всех размеров.
Тел.: 8-903-346-40-58. 7-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 1-25.

Хочу поделиться адресом Варисы Николаевны (она чувашка), которая помогла моему сыну бросить пить, раз и навсегда. Если у кого такая же беда, напишите ей письмо. 603105, Н. Новгород, ул. Б. Панина, д. 3«а»–127, Федоровой В.Н. Денег она с меня не взяла, я инвалид 2 гр. и пенсионерка. 1-2.

Продаю автомашину ВАЗ-21074 2004 года выпуска, цвет серо-синий, газ+бензин. Тел.: 8-927-666-24-74.

* * *

Продаю автомашины ГАЗ-53 самосвалы, 1979 года выпуска и 1980 года выпуска, в хорошем состоянии.
Тел.: 8-960-304-28-68.

* * *

Продаю: косилку сегментную КС-2,1; ворошилку роторную навесную на МТЗ-80(82); ВРН–4,2; плуг навесной ПН–2–30; ПЛН–3–35; культиватор-окучник КОН–2,8; культиватор навесной для сплошной обработки почвы КПН–4; фрезу навесную для МТЗ ФН–1,3. Тел.: 8-960-311-15-20, 8-937-370-63-32.

* * *

Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 6-10.

* * *

Продаю кур, гусят, утят, бройлеров, индюков. С доставкой. Тел.: 8-909-3000-818. 6-10.

Муркашри почтамт коллективĕ кунта товароведра ĕçлекен Н.А. Семеновăн амăшĕ
**Роза Петровна**
**ДАНИЛОВА**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле таранăн хурланни çинчен пĕлтерет.

СХПК ПЗ им. Е. Андреева выражает глубокое соболезнование родным и близким Андреева А.А. и Сорокиной Р.Л. по поводу кончины матери
**АНДРЕЕВОЙ**
**Юлии Михайловны.**

## Прогноз погоды

| | суббота 8 июня | | | | воскресенье 9 июня | | | | понедельник 10 июня | | | | вторник 11 июня | | | | среда 12 июня | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +10 | +19 | +19 | +13 | +10 | +19 | +19 | +15 | +11 | +20 | +21 | +16 | +15 | +20 | +23 | +20 | +18 | +22 | +20 | +17 |
| Давление мм | 748 | 748 | 747 | 746 | 745 | 746 | 745 | 745 | 744 | 745 | 743 | 743 | 742 | 742 | 741 | 740 | 740 | 741 | 742 | 743 |
| Влажность % | 90 | 58 | 50 | 83 | **92** | 64 | 52 | 81 | 90 | 61 | 48 | 72 | 77 | 78 | 62 | 70 | 77 | 79 | 70 | 73 |
| Ветер м/сек | 3 | 2 | 1 | 2 | 2 | 2 | 1 | 0 | 1 | 1 | 1 | 3 | 3 | 4 | 4 | 5 | 5 | 6 | 3 | 4 |
| | С-З | З | С | З | З | З | С-В | ШТЛ | З | Ю-З | Ю-В | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | С-З | З |
| Солнце восход / заход | | 04:08 | 21:35 | | | 04:07 | 21:36 | | | 04:07 | 21:37 | | | 04:07 | 21:38 | | | 04:06 | 21:39 | |
| Луна восход / заход | | 04:14 | 21:06 | | | 05:00 | 21:52 | | | 05:54 | 22:29 | | | 06:54 | 22:59 | | | 07:58 | 23:24 | |

Хаçатăн çитес номерĕ июнĕн 11-мĕшĕнче тухать.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 07.06.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4974.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.